ХЫПАР

12+

# САМАНТ

ЮПА
10 № 2014



***Ирина НИКОЛАЕВА:***
***"Пурсăра та – ырă ир!"***

# Ҫунат сарнă Шупашкар

***Юпа уйăхĕн 9-11 кунĕсенче Шупашкарта «Раҫҫей – спорт ҫĕр-шывĕ» Пĕтĕм тĕнчери V спорт форумĕ иртрĕ. Физкультура Раҫҫейре наци идейи вырăнĕнчех темелле. Пысăк спорт ҫĕр-шыв аталанăвĕнче, шалаш тата тулаш политикăра стратегиллĕ вырăн йышăнчĕ. Шупашкара Раҫҫей Президенчĕ Владимир Путин килни те ҫакнах палăртать. Форумăн пленарлă ларăвĕн ячĕ те шухăша ҫирĕплетет: «Спортри пĕрлĕхре – тĕнче тăнăҫлăхĕ: пĕтĕм ĕҫсен стратегийĕ».***




Республикăшăн форум яваплă экзамен вырăннех пулчĕ. Тĕнче шайĕнчи мероприятире Чăваш Енĕн тытăмлăх-никĕслĕх ресурсĕсем тĕрĕсленчĕҫ. Шупашкара тĕнчери 20 ҫĕр-шывран, Раҫҫей Федерацийĕн 81 субъектĕнчен хăнасем ҫитрĕҫ. Спорт уявне хутшăнма аккредитациленнисем кăна 2767 ҫын: яваплă тӳресем, пысăк ертӳҫĕсем, паллă политиксем, 50 яхăн Олимп чемпионĕ!

Раҫҫей Президенчĕ ҫумĕнчи Физкультурăпа спорта аталантарас енĕпе ĕҫлекен канаш ларăвĕ Ҫĕнĕ Шупашкарти Олимп резервĕсен ятарлă 3-мĕш спорт шкулĕнче иртрĕ. Шупашкарта «Паянхи спорт. Ҫĕнĕлĕхсем тата пуласлăх», «Спорт литератури, пресси, мультимедийĕ» Пĕтĕм тĕнчери выставкăсем уҫăлчĕҫ, вĕсене курма пиншер-пиншер ҫын пычĕ. Форум картинче 18 ĕҫлĕ мероприяти, республикăшăн аталануллă спорт тĕсĕсемпе 8 мастер класс йĕркелерĕҫ. Мастер классене 400 яхăн специалист хутшăнчĕ. Вĕсенчен 170-шĕ – Чăваш Енрен, ыттисем – Раҫҫейĕн 19 регионĕнчен килнисем.

Шупашкар ҫыннисемшĕн, хăнисемшĕн чи асра юлнисенчен, паллах – «ҫăлтăрпа» пĕрле ирттернĕ пĕв-турам (зарядка), утакансен Пĕтĕм тĕнчери кунне уҫни, «Спорт бульварĕн» хавхалануллă та хаваслă тараватлăхĕ.

Пĕв-турама пин-пин ҫын тухрĕ. Зарядкăна Мускав


















хӑни, спорт комментаторӗ Дмитрий Губерниев ертсе пычӗ, фитнес-аэробика федерацийӗн президенчӗ Оксана Вербина ӑна курӑмлӑн irттерчӗ. Енчен те халӑх умӗнче маршалсемпе генералсен ятарлӑ ушкӑнӗ тӑнӑ пулсан, вӗсем те Оксана Вербина мӗн хушнисене ахаль салтаксем пекех итлесе хаваспах пурнӑҫлатчӗҫ – иккӗленӳ ҫук!

Форум парадне, утакансен Пӗтӗм тӗнчери кунне уҫассине 30 пине яхӑн ҫын хутшӑнчӗ. «Ӗҫпе хӳтӗлеве хатӗр» (ГТО) тытӑмлӑхӑн нормативӗсене паракансен кунӗ те иртрӗ Шупашкарта – «Спартак» стадионра 1100 ҫын вӑйхал хучӗҫ. Уявӑн асамлӑхӗ вара Карл Маркс урамӗпе Ленин проспектӗнче «Спорт бульварӗнче» кӗтретленчӗ, 30 ытла спорт федерацийӗн интерактивлӑ лаптамӗсем уҫӑлчӗҫ унта.

«Раҫҫей – спорт ҫӗр-шывӗ» Пӗтӗм тӗнчери V спорт форумне 65 пин ытла ҫын хутшӑнчӗ, вӗсенчен 30 пине яхӑн шкул ачи. Ҫунатлӑ уяв! – ҫак сӑмахсем килеҫҫӗ тӳрех чӗлхе вӗҫне. Спортсменсем, сывӑ пурнӑҫа юратакансем вӗҫсе ҫӳрерӗҫ темелле ҫак кун. Калани пустуй сӑмах мар иккенне сӑн ӳкерчӗксемпе ҫирӗплетес.

**Руслан АЗМАБАД**







# Аякри анлăшсем ĕмĕтсемпе сывлаççĕ



***Татьяна Карманеева Шупашкар районĕнчи Ишекри вăтам шкулта 11 класра вĕренет. Шкул пурнăçне вăл 1-мĕш класранпах хастар хутшăнать: мероприятисене чун кĕртекеннисенчен пĕри пулнă хĕр пĕрчи. Вăтам пусăма çитсен ăна, çыру ăсталăхĕне палăрнăскере, шкул хаçачĕн редколлеги членне суйланă. Юлашки çулсенчи яваплă тивĕçĕ – класс старости. «Никам та çук та – çавăнпа староста турĕç», – тесе ăнлантарать Таня пуçлăха мĕнле «лекнине». Сăпайлăх ĕнтĕ: класра вăл тĕр-пĕччен мар вĕт. Тек никам та çук пулсан – суйлама çын çуккине чăнах та ĕненеттĕмĕр. Яланах тăрăшуллă, темле ĕçшĕн те яваплă, ыттисемшĕн (вĕрентекенсемпе вĕренекенсемшĕн те) авторитетлă пулнăран шаннă хĕрупраçа класс командирĕ пулма.***

Шкулта вĕренме пуçласанах Таня ташă кружокне çӳреме тытăннă. Çамрăк ташăçăсем вут та хĕлхем сапса тăракан пултарулăхĕпе таврари ялсенчи, Кӳкеç поселокĕнчи çынсене савăнтарнă та тĕлĕнтернĕ. 7-мĕш класа çитсен вара Таня юратнă кружокран сивĕннĕ.

– Çиччĕмĕш класа çитсен Ишек хĕрĕсен пурин те ташлама пăрахас килет-и? – мĕн сăлтава пула чипер пике ташă асамĕнчен хăтăлма шут тытнине пĕлес терĕмĕр эпир.

– Ташă кружокне çӳреме питĕ юрататтăмччĕ. Ташă пурнăça кĕвĕлентерет, пĕр вĕçĕм тĕрлĕ хускану тунăран ӳт-пӳ хăватпа тулать, çавăнпа питĕ чĕрĕ те вăр-вар çӳретĕн. Пăхма кăмăллă. Аслă классем еннелле вăхăт хĕсĕкленчĕ. Вĕренме те, ташлама та май сахалланчĕ – нимĕн те тума çук. Тепĕр сăлтав та тупăнчĕ. Вăл вăхăтра ташă кружокĕнчи хĕр ачасенчен чи пысăккиччĕ эпĕ. Репетицисенче юрĕ-ха тейĕпĕр. Сцена çинче вара? Ташлама тухатăн та – ыттисенчен уйрăлса тăратăн.

– Ку тăрăхри хĕрсене ăнланса пĕтереймĕн. Çут тĕнчере пур хĕр ача та çӳллĕ пĕвлĕ пулас тесе ĕмĕтленет пулсан – Ишек пикисем ку саккуна пăхăнмаççĕ тейĕпĕр. Шкулта пĕтĕм вĕрентекен юратнисен те хисеплисен йышĕнче – ку ĕнтĕ ăнланмалла. Педагогсен коллективĕ хастар та тĕллевлĕ, туслă та мал ĕмĕтлĕ – çакă та паллă. Юратнă предметсем, пит килĕштерменнисем пур-и çапах? – ыйтрăмăр Таньăран.

«Самант» тусĕсем, ăнланăр: мĕнлерех самант! Ĕмĕр тăршшĕпе шкулта лайăх паллăсемпе кăна ĕлкĕрсе пынă хĕр-упраçран: «Килĕшмен предметсем пур-и?» – тесе ыйтма хăйни – калама çук пысăк паттăрлăх. Ыйтрăмăр та – Ишек тăрăхĕнче çĕр те чĕтремерĕ, тепĕр кун хĕвел те тухăçранах хăпарчĕ. Çавăнпа пултаруллă та тăрăшуллă Таня хуравне ним хăрамасăрах вуласа пĕлме пултаратăр:

– Вĕренӳре пур предмет та килĕшет – физкультура çеç юратнă урок картне лараймасть. Манăн пур енĕпе те малта тата ыттисенчен лайăхрах пулас килет. Физкультура тĕлĕшĕнчен ыттисенчен иртме вара турă паман. Кашни çын чаплă спортсмен пулаймасть тесе чуна лăплантарасси çеç юлать.

– Чи-чи юратнă предметсен шутĕнче вара?

– Юратнă предметсем – литература тата физика. Илемлĕ литература шухăшсен, ĕмĕтсен, чун вĕçевĕн тĕнчине илсе каять. Унта вара аслă юрату çеç пурăнмасть, асап та пур çав юмахра.

Физика – йĕри-таврари чăнлăх, япаласен тата пулăмсен тытăмне тĕпчени, çут çанталăка ăнланни. Аслати авăтни – тӳпери Илле пророкăн урапи кĕмсĕртеттерни мар, пĕлĕтсем пĕр-пĕринпе пырса çапăнни çеç. Çăлтăрсем те çиччĕмĕш тӳпене çапса лартнă вут-кĕмĕл пăтасем маррине чухлатпăр эпир. Юрату лирикинче вара çăлтăрсем...

– Чипер пикене мĕн хумхантарать паян?

– Пĕр ыйту çеç канăç памасть: ППЭ мĕнле тытăпши? Паллах ĕнтĕ, çине тăрсах хатĕрленĕтĕп, çапах та пурпĕрех хăратать вăл. Енчен те лайăх балсене тивĕçсен: «Акă телей çитрĕ иккен!» – тесе сахалтан та пĕр 3 кун пĕр чарăнми пĕр вырăнта сиккелесе тăрас хăюллă шухăш пур. ППЭ кăтартăвĕсем аслă шкула вĕренме кĕме питĕ пĕлтерĕшлĕ.

– ППЭ ăнăçлă тытасси пирки иккĕленместпĕр-ха эпир. Сахалтан та 3 кун пĕр вырăнта сиккелесе тăрас ĕмĕтлĕ пулни пирки вара вăхăтлăн асăрхаттартăн. Хаклă тусăмăрсем, килес çул çĕртме уйăхĕн вĕçнелле Ишек патĕнчен иртсе кайнă чух темле хĕр-упраç урра! кăшкăрса çӳлелле трăст-трăст сикнине курсан ан тĕлĕнĕр: пурте питĕ йĕркеллĕ! Таня Карманеевăн ĕмĕчĕ тулнă – çакă çеç.

Пурнăç савăнăçпа тулăх. Саншăн хальлĕхе чи пысăк савăнăç мĕн?

– Тек ниçта та мар, шăпах Ишекре çуралса ӳснишĕн питĕ савăнатăп эпĕ. Пирĕн тăрăхăн çут çанталăкĕ юмахри пек тĕлĕнмелле. Сăрт çинчен çӳлтен таçта çити усăлакан анлăшсем чуна ĕмĕтсемпе тултараççĕ. Тĕрлĕ шухăш çуралать чĕрере. Çӳлтен аялалла пăхатăн та – этемлĕх аталанăвĕ, пурнăç тĕллевĕ пирки те шухăша каятăн. Ишек тăвĕ çинче тăратăн та – çут тĕнче ура айĕнчи пекех туйăнса каять тата. Чун ирĕклĕхĕ усăлать: чĕвен тăрсан Алтăр çăлтăр патне те çитес пекех. Саншăн пурнăçланман тĕллев пурнăçра пулма пултараймасть тесе ĕненетĕн.

– Таня, «Самант» тусĕсем – санăн тусусем. Мĕн сунасшăн вĕсене?

– Пурнăçри кĕтменлĕхсене, йывăрлăхсене тӳссе иртерме, сутă хĕвелпе тата таса тӳпепе киленсе пурăнма, сывăх çынсене юратма та упрама сунатăп пурне те.

**Владимир СТЕПАНОВ калаçнă**

# Çулсем тата çынсем

***Вăхăта çавăрлăхлаймăн, вăл шав малалла шăвать. Çулсем аякка кайса пыраççĕ, пурнăçри çавра датăсем вара çывхараççĕ. Акă, Элĕк районĕнчи Мăн Ямашри вăтам шкул та çĕнĕ çул пуçламăшĕнче 130 çул тултарать. Хучаш чиркĕвĕн прихутне кĕрекен шкул 1885 çулхи кăрлачăн 1-мĕшĕнче уçăлнă. Шкул статусĕ çапларах улшăнса пынă: чиркÿ прихут шкулĕ, пуçламăш шкул, 1934-1961 çулсенче – çичĕ çул вĕренмелли шкул, 1961-1994 çулсенче – сакăр çул вĕренмелли шкул, 1994 çултан – вăтам шкул. Паянхи куна çитиччен Мăн Ямаш шкулĕнче 1558 ача пĕлÿ илнĕ. Пĕтĕмĕшле пурĕ 189 педагог ĕçленĕ.***



Ольга Миронова

Шкул уçăлсассăнах кунта Мăн Ямашпа Яккушкăнь ачисем çеç мар, таврари Акташпа Чурпай, Кушлавăшпа Яманкасси, Шуркассипе Анат Çĕрпÿкасси ачисем те çÿренĕ. Вăтăрмĕш çулсен варринчен (çичĕ çул вĕренмелли шкул уçăлсан) вара Йĕрĕхкасси, Хупахушкăнь, Мăн Яваш ачисем те, вăрçă çулĕсем таранах, Мăн Ямашри тулли мар вăтам шкулта ăс пухнă. Вĕсенчен чылайăшĕ каярахпа учительсем, тухтăрсем, инженерсем тата ытти професси çыннисем пулса тăнă. Тĕслĕхрен, акă, Мăн Ямашри Захар Трофимович Трофимов (1897-1961) – генерал-майор. Виссарион Вениаминович Синичкин (1936-2003), Владимир Семенович Михайлов (1939-2005), Геннадий Александрович Савельев (1950) тата Йĕрĕхкассинчи Георгий Васильевич Краснов (1937-2012) писательсен анлă çулĕ çине тухрĕç.

Мăн Ямаш шкулĕн коллективĕнче 17 педагог. Вĕсенчен чи аслисем, чи нумай ĕçлесе пысăк опыт пухнисем – Валентина Павловна Барановăпа Ольга Ивановна Миронова. Иккĕшĕ те тĕрлĕ çулсенче Чăваш патшалăх педагогика институтĕнче аслă пĕлÿ илнĕ.

Валентина Баранова кăçал 42-мĕш çул ĕнтĕ классенчи ачасем умне тухрĕ. Вăл вырăс чĕлхи тата литературине вĕрентет. Хăйĕн профессине чунтан юратакан вĕрентекен кашни вĕренÿ çулнех тин ĕçлеме пуçланă педагог пек хумханса кĕтсе илет.



Валентина Баранова Мăн Ямаш шкулне пĕтернĕ Денис Матвеев тата Кристина Сорокинăпа (2010 çул).

– Суйласа илнĕ ĕçĕн пĕлтерĕшне ăнланни, ачасене юратса тĕрĕс воспитани пама тăрăшни ÿсĕмсен çăл куçĕ пулса тăрать. Эпĕ çакна питĕ лайăх туятăп, çавăнпа пĕрлех ашшĕ-амăшпе те тачă çыхăну тытатăп, кирлĕ сĕнÿсем паратăп.

«Ĕç ветеранĕ» медале тивĕçнĕ вĕрентекенĕн Раççей, республика тата район шайĕнчи Хисеп грамотисем нумай. Чĕрĕк ĕмĕр шкул директорĕн вĕрентÿпе воспитани енĕпе ĕçлекен çумĕ пулнă Валентина Павловна мăшăрĕпе 5 ача – 2 ывăлпа 3 хĕр – пăхса çитĕнтерчĕç, пурнăç çулĕ çине кăларчĕç.

Ольга Ивановна Миронова кăçал 36-мĕш вĕренÿ çулне пуçларĕ. Чунпа ватăлман вĕрентекен Хĕрлĕ Чутай районне кĕрекен кÿршĕллĕ Анат Çĕрпÿкассинче çуралса ÿснĕ. Тури Çĕрпÿкассинчи 8 çул вĕренмелли шкул хыççăн Штанашри вăтам шкула кайнă. Шкулĕ вара 10 çухрăмра. Сивĕ çумăр айĕнче пылчăк çăрса, çил-тăман витĕр юр ашса çÿренĕ ачасем ăс пухма. Аттестат илсен Ольга Ивановна пĕр вăхăт клуб ертÿçинче те ĕçленĕ. Чунĕ вара урăх ĕç патне туртăннă. 1979 çулта хĕр-упраç педагогика институтĕнчи биологи факультетне куçăмсăр майпа вĕренме кĕнĕ, çав хушăрах Мăн Ямаш шкулĕнче ĕçлеме тытăннă.

Ĕнер кăна пулнă тейĕн шкулта 1-мĕш урок ирттерни. Паян вара?.. Паян каллех шкул, уроксем. Пурнăç хăй йĕркипе пырать. Ольга Ивановна мăшăрĕпе 3 хĕр çуратса ÿстернĕ. Ĕç ветеранĕ Раççей, республика, район шайĕнчи Хисеп грамотисене тивĕçнĕ.





Мăн Ямаш шкулĕнче 30-40 çул хушши ĕçленĕ тата ĕçлекен педагогсен хисепĕ 13-е çитнĕ. Асăнса тухар-ха вĕсен ячĕсене. Мăн Ямашран – Анна Максимовна Тимофеева (1899-1989), Раиса Ильинична Малова (1925-2003), Ольга Ивановна Миронова (1959); Яккушкăнĕнчен – Василий Андроников (1912-1990), Вера Ефимова (1914-1989), Иван Андроников (1916-1984) Маргарита Григорьева (1926) тата педагог-мăшăрсем Людмилăпа (1949-2002) Николай Никитинсем (1947), Людмила Майорова (1937-2003), Владимир Николаев (1948) Валентина Баранова (1951) тата Яманкассинче пурăнакан Ольга Данилова (1953). Шел, вĕсенчен çурри ытла çут тĕнчере çук ĕнтĕ. Пурнăçне шкулпа, çамрăк ăрăва вĕрентсе воспитани парассипе çыхăнтарнă çынсем УЧИТЕЛЬ-ВĔРЕНТЕКЕН текен таса та сумлă ята яланах чысра тытнă, тытаççĕ те.

**Геннадий САВЕЛЬЕВ,**
**çыравçă-тавра пĕлÿçĕ**

# Сăваплă янаварсем

*Несĕлсемпе танлаштарсан, çут çанталăка эпир ытларах ăс-тăнпа ăнланатпăр, унăн кĕтретне чун витĕр кăларма эпир самаях суккăрланнă. Темĕн те пĕлетпĕр, ăс-курăм шутсăр анлă: çут çанталăк асамлăхĕ валли вырăн юлман та чĕрере. Пирĕн чуна электричество кĕртсе çутатнă, ăс-тăн çиçсе кăна тăрать. Мăн-мăн асаттесен уçлăх-тĕнчи вара сар хĕвел куллипе те, çут уйăх çутипе те, ялтăр çăлтăр вылянăвĕпе те капăрланнă.*

*Тĕнче тытăмĕшĕн сăваплă чĕр чунсене палăртнă несĕлсем, хăйсен ĕçĕсене те шухăшĕсене вĕсен пурнăçĕпе килĕштернĕ. Çав аслă чĕр чунсен тĕнче тата çын умĕнчи пĕлтерĕшне, этемĕн хăйĕн çав сăваплă янаварсем умĕнчи яваплăхне мифологи ытарлăн палăртнă.*

*Чăваш несĕлĕсем сума сунă, мифологире тата халăх тĕнче курăмĕнче малти вырăнсенче тăнă çичĕ чĕр чуна – аслă чунсене, сăваплă янаварсене – уйăртăмăр эпир. Асăнса тухар вĕсене: 1) лаша, 2) пăлан, 3) кашкăр, 4) ăмăрткайăк, 5) акăш, 6) тăрна, 7) упа. Сăмаха тӳрех татар – кăтартнă ятсарпа (списокпа) килĕшмесси те пултаратăр, мĕншĕн тесен халăх ăс-тăнĕнче аслă янаварсен çакнашкал рейтингĕ çук. Мифологири чĕр чунсен хăвачĕ лару-тăрăва кура тулать. Апла пулсан вĕсен юм-терменĕн хевти тĕрлĕрен. Çапах та вырăнланă список туса пăхас терĕ «Самант». Сăваплă янаварсен парадне уçаканĕ –*



## ЛАША

Мифологири лаша – тĕнчесем те уçлăхсем тăрăх çӳрекен янавар. Тĕнче тытăмĕнче урхамах арлăх (аçалăх) пуçламăшне палăртаканни. Вăл нимĕнле усалтан та хăрамасть, нихăçан та çултан аташмасть. Хăй тĕллĕнлĕхĕ пысăк унăн – турăсене те итлемессе пултарать. Çынна вара яланах итлет. Лаша пулăшнипе ĕнтĕ чăн хăватлă этем турăсемпе тавлашаять. Мифологири ут – тӳпе урхамахĕ. Турăсем те ут утланса вĕçеççĕ. Паттăр çын лаша утлансан хуть те мĕнле усала та хирĕç тухаять.

Урхамах леш тĕнчене те çул пĕлет, çавăнпа вилнĕ çыннăн ӳтне пытарма лашапа илсе кайни аван шутланнă. Чăваш юмăçисем, камлакан-юмлакан шамансем пекех, сывлăшсемпе те сусăсемпе (духсемпе тата сущностьсемпе) тĕл пулма утпа çӳреççĕ.

Халăх çĕр ĕçĕпе пурăнма тытăнсан лаша сăнарлăхĕ те улшăннă. Вăл çуйкăраллăхне çухатнă темелле. Çĕр сухалакан, Çĕр-аннен ӳтне уçакан пулса тăнăран ăна вăрçă янаварĕ тесе пит йышăнмаççĕ. Пурпĕр лаша асамлăхĕ халĕ те сисĕнет-ха. Чӳк тумалли янаварсенчен вăл чи асли. Патшан е çар пусĕн мăнаçлăхне, пĕр-пĕр паттăрăн хастарлăхне палăк лартса кăтартас тесен ытларах чух вĕсене урхамах утлантараççĕ.



## ПĂЛАН

Çак янавар тулăхлăх паракан турăна сăнарлакан чĕр чун шутланнă. Тĕнче тытăмĕнче пăлан амалăх пуçламăшĕн янаварĕ. Çынсем ăна чул ĕмĕрĕнчех пуç çапма тытăннă, унăн шăмăран е чулран касса кăларнă кĕлеткисене археологсем нумай тупаççĕ. Пăланăн евĕрлĕхĕ – вăл этеме çул кăтартса пырса хăтлă та тулăх çĕрсем кăтартни. Ун хыççăн кайсан – пĕтместĕн. Хунсем Европăна килнине те хавхасем пăланпа çыхăнтараççĕ. Хунсен уртисене тинĕс урлă каçмалли çула кăтартаканĕ шăпах çак янавар пулнă имĕш.

Йӳркĕн халăх çĕр ĕçĕпе тĕпленсен пăлан сăнарĕ мифологире вăкăрпа ылмашăнать. Çĕнĕ çĕре куçакансене ял никĕслеме çул кăтартаканĕ пăлан мар, вăкăр пулса тăрать. Çынсем вăкăр хыççăн пыраççĕ те лешĕ ăçта канма выртать – çавăнта пурăнма тытăнаççĕ.

Вăкăр хĕвел туррин сăнарлăхне çухатнăпа пĕрех, асамлăхĕ сĕвĕрĕлнĕ унăн. Вăл вăйхала, тулăхлăха, аслăлăха ытларах пĕлтерет. Çĕр паракан пуянлăха палăртать. Учӳк ирттернĕ чух çӳлти хăватсене вăкăр пусса çырлахтарни Çĕр-анне халăха тырă-тухăçпа тивĕçтертĕр тесе ыйтни. Вăкăр (лаша пекех) – турăсене чӳклемелли чĕр чун.



## КАШКĂР

Тукмак хӳрене сума сăвасси те пуç çапасси Евразипех тĕл пулать. Рим хули мĕнле никĕсленни пирки калакан хавхана кăна аса илĕр. Тĕрĕк халăхĕсене пĕр культурăна пĕрлештерекен мифсенчен чи палли – тĕрĕксем патша йăхĕнчен тата кашкăр аминчен пулса кайнă тени. Чăваш несĕлĕсемшĕн кашкăр – Пихампар йытти, турă чĕр чунĕ. Халăх тĕнĕнче тӳпери иерархинче Аслă Турă хыççăн Пихампарпа Пӳлĕхçĕ тăраççĕ. Пихампар çут тĕнчери мĕн чĕрĕ – çавăншăн яваплă (чĕр чун турри тени унăн ытамлăхне ансăрлатни çеç), Пӳлĕхçĕ вара çут тĕнчере мĕн чĕрри еплерех пурăннишĕн явап тытать (шăпа мĕнле килессине кăна палăртать тени – каллех унăн ытамлăхне ансăрлатни). Тимлĕрех шухăшласан тӳрех курăнать: Пихампар та, Пӳлĕхçĕ те уйрăм турăсем мар, вĕсем Аслă Турă тĕкĕрĕсем, çынсем кĕл тунă чухне пил ыйтмалли ячĕсем. Аслă Турă, Пихампар тата Пӳлĕхçĕ – пĕр тытăмах.

Пихампарăн çулташĕ – шурă кашкăр. Вăл халăхсене пулăшать, паттăрсен шанчăклă тусĕ пулса тăрать. Вырăс халăх юмахĕнчи сăрă кашкăр – тĕрĕксен шурă кашкăрĕн тĕкĕрĕ. Тăван культура хытă улшăнчĕ. Çавăнпа халăх ăс-тăнĕнче кашкăр вырăнне йытă – этем тусĕ – ытларах вырăн йышăнать халĕ.

Кашкăр асăрханулла та ăслă кăна мар, вăл таçта та çитекен тĕлĕнмелле чăтăмлă чĕр чун. Пирĕн несĕлсемшĕн унăн чунĕ чĕр тимĕр шутланнă. Анăç Европăра вара кашкăр сăваплăхĕ урăхларах, тукмак хӳре чылай чух тӳнтермĕше çаврăнать.

## ĂМĂРТКАЙĂК



Пур халăх та ăна кайăксен патши тата тӳпесен хуҫи, хĕвел патнех вĕҫсе хăпаракан кайăк тесе йышăнать. Чăваш мифологинче, фольклорĕнче тĕл пулакан унăн тепĕр ячĕ – услан кайăк (арăслан кайăк). Пирĕн несĕлсем турăсем те ăмăрткайăк пек пулса вĕҫеҫҫĕ тесе ĕненнĕ (Будда та услан кайăк ҫине ларса вĕҫсе ҫӳрет). Лаша пекех, ăмăрткайăк та урăх тĕнчесене кайма ҫул пĕлет, сывлăшсемпе сусăсене курать. Вăл пулăшнипе юмăҫсем таҫти тӳпесене ҫитсе килме пултараҫҫĕ.

Мифологире ăмăрткайăк тĕнче тăвĕн тăрринчи тĕнче йывăҫҫи ҫинче ларать (миф вариантĕнче йывăҫҫи икĕ вĕҫлĕ: пĕр тăрринче – услан кайăк, тепринче – тăмана). Ăмăрткайăк ĕмĕрĕ вăрăм, ҫитменнине вăл хăйне ҫамрăклатма та пултарать. Тĕнче хĕррине кайса чĕрĕ шыв кӳллине кĕрсе тухать те ҫамрăклăхне таврать.

Пирĕн несĕлсен шухăшĕпе, ăмăрткайăк – ҫут тĕнчене туса янă йĕркене сыхлакан хăват. Услан кайăк пур чухне – тĕнче пĕтмест.

## АКĂШ



Унăн ячĕ хăех вăл ҫутăпа, тасалăхпа ҫыхăннине калать – Шур кайăк (Ак кăш). Акăш – Ама туррăн кайăкĕ. Тӳпере пысăк кайăксен карти курăнсан – акăшсем-и вĕсем, тăрнасем-и е хурсем – несĕлсем ăна акăшсем картипе вĕҫеҫҫĕ тенĕ. Вĕсем ырлăх, пуянлăх, перекет илсе килессе шаннă. Турă кайăкĕсенчен пил ыйтса хĕрсем-хĕрарăмсем ҫĕре выртса йăваланнă. Шур кайăк ҫемье телейĕ кӳрет тесе ĕненнĕ. Акăш чипер пикене ҫаврăнма пултарать, илемĕпе кăна мар, ӳт-пӳ йăрăслăхĕпе, амалăхĕпе тыткăнлать.

Мифологире акăшăн тĕкĕрĕ – хур-кайăк. Акăш хитрелĕхĕпе палăрать пулсан, хур-кайăк – вĕҫенлĕхĕпе. Вăл чи ҫӳллĕ тӳпере кăна мар, космос уҫлăхĕнче те – ҫăлтăрсем патĕнче вĕҫме пултарать. Галактикăн тĕнĕлне вырăссем Сĕт ҫулĕ теҫҫĕ пулсан, пирĕншĕн вăл Хур-кайăк ҫулĕ (пирĕн галактика чăвашла Хур-кайăк ҫулĕ ятлă). Шур акăш пекех, хур-кайăк – ҫемьере юратăва упракан хăват. Ҫак икĕ кайăк, тĕрĕссипе, пĕр сăнарлăха пĕрлешнĕ: хур-акăш. Вырăс юмахĕсенче те вĕсем ҫак пахалăхпах – хур-акăш пулса ҫӳреҫҫĕ.

## ТĂРНА



Несĕлсем ĕненнĕ тăрăх, вилнисен чунĕсене анăҫа (леш тĕнчене) тăрнасем илсе каяҫҫĕ. Расул Гамзатовăн «Тăрнасем» сăввинех аса илер. Поэт халăх сăмахлăхĕпе, мифологипе чĕррĕн те витĕмлĕн усă курать, чуна пырса тивекен хайлав ҫуратать. Тăрнасен мифологири сăнарлăхне ярӳҫҫăн кăтартать сăвă (авар сăмахлăхĕ пире мĕншĕн ҫывăххи пирки калаҫмăпăр: ку истори пысăк).

Тăрна ҫĕрпе пĕлĕте пĕрлештерекен, турăсем шухăшĕсене пурнăҫлакан вут-кайăк. Леш тĕнчене кайнисем ҫут тĕнчере юлнă тăванĕсене килсе курма май тупсан – вĕсем ҫĕр ҫине тăрна пулса таврăнаҫҫĕ, ял ҫийĕн вĕҫсе ҫаврăнаҫҫĕ. Ҫавăнпа чăвашсем тăрна тытни питĕ ҫылăх тесе йышăннă. Ҫав вут-кайăка вĕлернĕ ҫыннăн ăратне вара инкек ӳкет тенĕ.

Ҫӳлти турăсен элчи тепĕр пысăк пахалăхпа та аслă. Несĕлсен шухăшĕпе, тĕнче ҫăмартаран пулса кайнă. Тĕнче ҫăмартине сăмсипе катса ҫĕмĕрекенĕ вара – тăрна. Ҫăмарта хуппине ватса вут-кайăк хĕвеле тата сумăра (тӳпери океана) ҫул панă.

Мифологире тăрнана ҫывăх сăваплă чун – чĕкеҫ. Вăл та турăсен патне ҫӳрет, вилнисене ăсатать. Чĕкеҫ те вут-кайăк пулнă май унăн сăнарлăхĕ килти вучахпа ҫыхăнать, вăл амăшлăха тата ĕҫченлĕхе палăртать. Хĕр сăн-сăпатне, ӳт-пĕвне, калаҫăвне ҫак кайăк илемĕпе танлаштараҫҫĕ. Ҫурт ҫине чĕкеҫ йăва ҫаврăни – ырă паллă.

## УПА



Утаман сăваплăхне тĕрĕксем фин-угор, славян тата Анăҫ Европа халăхĕсенчен йышăннă тесе калаҫҫĕ чылай чух. Пирĕн археологсем Улатăр ҫывăхĕнчи Утюж ҫырми патĕнче упа чӳклеми вырăнне тупни ҫинчен «Самант» ҫырнăччĕ ĕнтĕ (ака, 4№, 2012). Мăкшăсен несĕлĕсем 4 пин ҫул каялла унта упана пуҫ ҫапнă. Ҫак чӳклеме комплексĕ Атăлҫире чи пысăкки, 30 ытла упа шăмшакне тупнă унта.

Упа сăнарлăхне чăваш несĕлĕсем ытти халăхсенчен илнĕ шухăшпа асăрханса килĕшмелле. Чăнах та, утаманăн ҫĕнĕ сăнарлăхĕсене йышăнма, ҫĕнĕ пахалăхĕсене хушма пултарнă. Упа этеме ӳт-пĕвĕпе ҫывăх аслă чун шутланнă. Вăл икĕ уран ҫӳреет, этем пекех тем те ҫиет: ҫăткăн та, ҫăткăн та мар. Тирне сӳсен упа – пăхма ҫын пекех. Хăйне пурăнмалли кил-вырăн туни те упан «этемлĕхне» ӳстерет.

Упан тĕнче тытăм сăваплăхне чăваш несĕлĕсем авалтанпах чысланă тесе йышăнмалла. Сăваплă янаварăн никĕслĕ пахалăхĕ ҫакăн пирки калать. Этем ҫӳлтипе аялти тĕнчесем хушшинче – варринчи тĕнчере пурăнать. Мифологире вара варринчи тĕнчен хуҫи – упа. Пирĕн несĕлсемшĕн утаман вăрман хуҫи ҫеҫ мар, ҫĕр хуҫи пулнă.

Тепĕр хут асăрхаттаратпăр – сăваплă янаварсен вырăнлăхне урăхла та кăтартма пулать. «Самант» сĕнекен список ансатлăхĕпе тата витĕмлĕхĕпе меллĕ.

**Владимир СТЕПАНОВ**

*«Иртнипе малашлăх чиккинче» проект ЧР Информаци политикин тата массăллă коммуникацисен министерстви пулăшнипе пурнăҫланать.*



# Океан леш енче

***Пĕлтĕр эпĕ «Work and Travel USA» программăпа Америкăри Айдахо штатĕнче ĕçлерĕм. Айдахо – Лăпкă океанăн çурçĕр анăçĕ, штат Канадăн Британи Колумбийĕ провинцийĕпе чикĕленет. Эпĕ пурăннă хула – Кер-д'Ален (Ker-d'Alen). Ячĕ ку тăрăхра пурăннă индей йăхĕнчен юлнă, «Йĕп чĕри» тенине пĕлтерет. Хула çакăн ятлă кÿлĕ хĕрринче вырнаçнă, çавăнпа ăна вырăнти халăх «Кÿлĕ хули» (Lake City) тет. Кер-д'Ален юлашки вăхăтра туризма пула ытларах аталанать.***

Пĕрлешÿллĕ Штатсенче пĕрле пулмалли юлташ кăшт каярах çула тухнăран океан леш енне пĕчченех каçрăм. Мускавран Стамбула вĕçекен самолетпа Турцие çитрĕм, унтан Нью-Йорк рейсĕпе Атлантика урлă вĕçтертĕм.

Çĕр чăмăрĕн чи паллă хулине çĕрле анса лартăмăр. Аэропортран урама тухрăм. Сывлăш тăварлă та нÿрлĕ – Атлантика океанĕн сывламĕ сисĕнет. Урам тулли çын, йĕри-тавра сарă такси. Нью-Йорк – Пысăк панулми (Big Apple) – нихăçан та çывăрмасть. Хама урăх планета çине лекнĕнех туйса илтĕм. Киле çитме миçе пин çухрăм: эпĕ тĕнчен тепĕр енче! Ăста вăл Чăваш Ен, кунта – Америка. Кăшт тăрсан тĕл пулу тĕлĕнĕвĕ сĕвĕрĕлчĕ.

Кăшт вăхăт пуррипе усă курас терĕм, Манхэттена çитсе курас, Тайм-скверпа утса пăхас. Метро ăстине урамра çамрăк хĕрарăмран акăлчанла ыйтрăм. Вăл вара манпа вырăсла калаçма тытăнчĕ. Украинăран иккен. Ăнлантарса пачĕ Манхэттена мĕнле çитмеллине.

Метрона ансан кăмăл хуçăлчĕ. Мускаври метро лайăхрах та тасарах. Кунта вара аванах мар шăршă çапса кайнă, йĕри-тавра çÿп-çап, ăстиçуксем (бомжсем) йышлăн. Пуç тавра тепре çавăрса илтĕм те – Бродвейпа уçăлса çÿрес шухăша пăрахăçларăм. Самолет ирпе 6-ра, халĕ вара çурçĕр иртни 2 сехет. Манхэттенпа паллашма вăхăт сахалтарах. Спринтер пек вирхĕнсе тухса кайнинчен усси сахал. Аэропорта таврăнтăм та телефона вăратмалла лартса тĕлĕрсе илтĕм.

Кер-д'Алена транзитпа çитмелле. Аризона штачĕн тĕп хулинче – Финиксра икĕ сехет самолет кĕтме тиврĕ. Финикс (е Феникс, Phoenix) – кăнтăр анăçри чи пысăк хула, çĕр-шывĕпе илсен вăл пысăкăшĕпе 6-мĕш вырăнта. Çут çанталăк кунта урăхла, океан хĕрринчи пек мар – пуш хир йĕри-тавра.

Эпĕ каллех сывлăшра. Самолет Спокан (Spokane) хулине вĕçет. Ячĕ индей чĕлхинчен – «Хĕвел ачисем» тенине пĕлтерет. Вăл Вашингтон штатĕнче вырнаçнă. Спокан аэропортĕнче мана пĕр шухăш канăç памарĕ: акăлчанла чиперех калаçатăп-ши, ăнланаççĕ-ши мана американсем? Ĕç паракампа та тĕл пулмалла, ăста вăл? Кер-д'Ален кунтан 48 çухрăмра. Манăн вара телефон батарейи ларнă.

Урамри ватă мăшăр патне пырса хам пирки ăнлантартăм. Америкăри асатте-асаннесем пирĕн патри ватăсенчен самай уйăрăлса тăраççĕ. Чăваш карчăкки-старикки – атăпа-калушпа, çĕлĕкпе-тутăрпа, кивĕ тумпа. Океан леш енчи ватăсем вара хитререх: хăйсене пăхаççĕ, шап-шурă шăллă кулăпа çиçеççĕ, илемлĕ тăхăнаççĕ, çынпа кăмăллăн калаçаççĕ.

Ватă мăшăр эпĕ акăлчанла калаçнине аванах ăнланчĕ, карчăкки мана ĕç паракан çын патне хаваспах шăнкăравларĕ. Лешĕ мана кĕтме хушрĕ, такси яма пулчĕ. Машина кĕтнĕ май пĕр таксистпа калаçса кайрăм. Вăл американ марри тÿрех паллă – акцент вăйлă. Украинăран иккен, адресне те пачĕ. Çакна та асăрхаттармалла: енчен те Америкăра пурăнакан Раççейрен (е СССР анлăшĕнчен) тухнă çынсене тĕл пулсан, сире вĕсем хăрушла хавас пулаççĕ тесе ан шухăшлăр. Эпир вĕсемшĕн никам та мар, нимĕн те пĕлтерместпĕр. Никам та ыталаса илме хатĕр кĕтсе тăмасть сире, ас тăвăр.

Кер-д'Аленра эпĕ хăна çуртĕнче ĕçлерĕм. Эрнере 6 кун – 9-тан тытăнса 16 сехетчен ĕçлемеллеччĕ. Шалу – сехетре 7 доллар. «Work and Travel USA» программăпа ĕçлекенсем пиллĕкĕнччĕ. Эпир Раççейрен иккĕн, виççĕшĕ Китайран. Вĕсенчен иккĕшĕ – хĕрсем. Туслашрăмăр китайсемпе. Вĕсем те иккен пĕр-пĕринпе Америкăра çеç паллашнă, пурте тĕрлĕ хуларан килнĕ.

Бродвейпа утса тухас шухăша каярахпа пурнăçа кĕртрĕм. Нью-Йорка ятарласа кайрăм эпĕ. Чайна-таунри (китаецсем пурăнакан районти) хăна çуртне вырнаçрăм, 3 кун хула курса çÿрерĕм. Темĕнпе те илĕртет мегаполис, çут тĕнчере мĕн пур – ăна кунта тупма пулать. Мĕн калас сыв пулашмалла? Çул çÿрев чуна анлăлатать, тавра курăма сарать, ăс-тăна çивĕчлетет. Май пур чухне ан ÿркенĕр çула тухма.

***Сăн ÿкерчĕкре:***

***Нью-Йоркра Тайм-сквер патĕнче полицейскисемпе фотосесси ирттертĕмĕр***

**Роман ВОЛКОВ**



# Кăтик-кăтик ас-илӳ

***Иртнине аса илетĕн те халĕ – кулас килет. Куççуль тухиччен. Епле айван пулнă вĕт-ха эпĕ: тĕттĕм кĕтесре пытанса ларакан вăтанчăк, именчĕк хĕр ача. Ыттисем ушкăна пухăнса хаваслăн ахăлтатнă-выляна чухне эпĕ айккинче çӳреттĕмччĕ, тантăшсемпе хутшăнма пĕр пĕрчĕ кăмăл та çукчĕ. Мĕншĕн тетĕр-и? Ара, хама вĕсенчен урăхларах тесе шухăшлаттăмччĕ, манăн «ăслă» шӳтсене никам та ăнланмастчĕ...***

Хам пĕчченех пĕр пысăк тĕнче пулнă эпĕ. Çук, мана кичем марччĕ. Тем те пĕр те шухăшласа кăлараттăмччĕ. Кĕнеке вулама юратни те витĕм кӳчĕ пуль. Пĕве кĕнĕ вăхăтра уйрăмах. Хайлавсен тĕнчине кĕрсе ӳкеттĕм те нимĕн те кирлĕ марччĕ тек. «Серая мышка» тени шăп ман çинчен ĕнтĕ. Шухăша путса çӳреме юрататтăмччĕ, вуланă калавсем, унти сăнарсем пирки нумай шухăшлаттăм, хама вĕсен вырăнĕнче кăларса тăратататтăмччĕ... Пĕтĕмĕшле илсен – хамăн тĕнчере пурăнаттăмччĕ. Романтикăна пуçĕпех путнă хĕр-упраçчĕ эпĕ.

Çапла аслă класа та çитрĕм. Çамрăклăх хĕвелĕ айĕнче пурнăç йăлтах улшăнчĕ. Косметика тенине усă курма, хĕр туссемпе каççерен клуба тухма пуçларăм. Ун чухне тăххăрмĕш класра вĕренеттĕм. Чĕрене юрату кĕтмен çĕртен пырса тивсен çухалсах кайрăм.

Пĕр класрах вĕренеттĕмĕр унпа. Вăл çӳллĕскер, кăштах туллирех, сарлака хул-çурăмлă. Тĕнчери чи чипер каччă пулса тăчĕ маншăн. Ăшри туйăмсене çынсенчен пытарма тăрăшрăм пулин те манпа темĕскер пулса иртнине ыттисем пур пĕрех сисрĕç. Кирлĕ мар ыйтусенчен хăтăлма имидж пулăшрĕ: эпĕ вĕт акăш-макăш романтически пике – мĕн тĕпчесси, ахалех паллă, кăштах тайăлнă!

Чун çунтармăша кашни кун курни маншăн пурнăçра чи лайăххи, чи ырриччĕ. Унпа калаçма мар, сывăхне пыма та шикленеттĕмччĕ, çĕр тĕпне анса каясла пăлханаттăмччĕ. Куçсемпе тĕл пулсан вара – пĕтрĕ пуç: пиçнĕ помидор пекех хĕрелеттĕмччĕ, пит çăмартисем вара хĕртнĕ çатмаран та хĕрӳрех пĕçеретчĕç. Асар-писер туйăмсен тăвăлĕ манăн ăс-пуçа веçех кутăн çавăрчĕ. Çав каччă пирки кăна пĕтĕм шухăш, унсăр пуçне урăх нимĕн те çук тĕнчере. Кĕнеке вулама ларатăп – куç умĕнче унăн сăнарĕ, юрă итлетĕп – ăна аса илетĕп. Çывăрма выртсан та куç умĕнчен каймасть, тĕлĕкре те ăна куратăп.

Икĕ çул асаплантăм çапла. Юрать-ха пĕр çывăх юлташ пурччĕ, хамăн хăрушла пысăк юрату пирки каласа-ĕмĕтленсе унăн хăлхине çĕртеттĕмччĕ. Эпĕ аташнине мĕнле тулккăш чăтнă тусăм, мĕнле чĕнсе илмен психсене сыватакан тухтăрсене? Чун йăпатмăш вăйă та пурччĕ манăн. Савниййĕн сассине илтес тесе килти телефонран шăнкăравлаттăм, леш енче кĕпчекне çĕклесен – пăлханнипе çамка тарласа каятчĕ, чĕре 100 çухрăмлă марафон чупса килнĕ хыççăнхи пекех хăвăрттăн тапатчĕ. Паллах хам нимĕн те чĕнместĕмччĕ. Тĕнчери чи пысăк та чи хĕрӳ манăн юратăвăм: «Алло!» – тенине çеç итлеттĕм.

Вăт епле ăссăр хĕр пулнă эпĕ. Туйăмсен аварне путса вилнĕ вутăш картне ларнăшăнах мана шеллесе вилсе каймалла сирĕн. Çак çеç-им ха? Эпĕ çав каччăна вилсе каясла юратрăм пулсан та, çут тĕнче мана шеллемерĕ. Пушшех те калам: управçă пирĕшти те пăрахса кайрĕ мана. Юратнă каччă мана асăрхамарĕ. Вăл урăххине килĕштерни чĕрене питĕ ыраттаратчĕ. Клуба тухсан чĕр тамăк мĕнлерех пулнине туяттăм: çĕр çĕклейми манăн юрату тепĕр хĕрпе юнашар – яланах иккĕшĕ йăхăлтатса, ыталашса тăратчĕç. Калăн – пĕр-пĕрин çумне çилĕмпе çыпăçтарса хунă! Ку мана питех те тарăхтаратчĕ. Ним тăвайманнипе, кулянниппе чун каниччен йĕреттĕмччĕ вара клубран таврăнсан. Манăн минтер миçе пăт куççуль çăтнă-ши? Халĕ те тĕпĕ-йĕрĕпе типсе çитеймен пуль-ха вăл!

Юрату çапла асап, ырату кӳнине пĕлмен эпĕ. Туйăмсен вутĕнче çунса кĕлленнĕскер, малашне пĕр каччăпа та туслашмăп, çывăхланмăп тесе тупа турăм. Каччăсемсĕр те пурăнма пулать, мăн кăмăллăн, арçынсенчен кулярах та йĕрĕнерех утăп пурнăçпа тесе ĕненсех тупа турăм! Майĕпен тăна кĕме тытăнсан чуна хытарма хушрăм хама хам. Çав тери тăрăшрăм чун чирĕнчен хăтăлма. Куççуль пĕрре шăлса типĕтмелĕх кăна туха пуçларĕ, кăшт тăрсан типсех ларчĕ. Пуçа каçăртса малашлăха телейлĕ куçпа пăхмалли самана хĕвелĕ хĕрелме тытăнчĕ тухăçра. Ыррине те телейлине çеç ĕнентĕм.

Вырăсла каласан, настроилась на позитив. Юрласа пурăнас килекен пулса кайрĕ тинех. Икĕ çул – шухăшлăрха: икĕ çул асаплантăм юрату тамăкĕнче, мĕнле асапланса вилсе выртмарăм – тĕлĕнмелле.

Пĕрремĕш юрату пурнăçра, чĕрере тарăн йĕр хăварчĕ. Шкул пĕтерсен хулана куçсан та ăна тăтăшах аса илеттĕм. Пуçри шухăшсемпе чĕрери туйăмсене пĕр самантрах хуратса пăрахаймастăн çав. Анчах та вăхăт сыватать. Чуна ыраттаракан аса илӳсем те майĕпен манăçа тухса пычĕç. Халĕ шухăшлатăп та – тен, вăл чăн-чăн юрату та пулман? Тен, ыттисене курса манăн та камшăн та пулин тунсăхлас, кам пирки те пулин шухăшлас килнĕ? Çамрăк пуçа минретекен, ухмахлатакан япала çеç пуль вăл пĕрремĕш юрату. Юрать-ха ăс-тăн та, чĕре те хăтăлчĕ унран. Çавăншăн савăнатăп.

**Ninel - Хĕвел**



# Лиска йытă е Йăвари кайăк



*Халăх ăсĕ, ваттисем ăс вĕрентни ахальтен мар. «Çынна ăмсанакан – хăй телейсĕр пулать», – тесе ас тутарнă пиртен аслисем.*

Веркка сăнĕпе хитре пек те, хитре мар пек те: хăçан мĕнле пăхан... Пичĕ ун шуранкарах тата куккук тăриллĕрех. Кăмăлĕ те çавăн пекех. Хĕр пĕрчи пĕвĕпе лутра пулин те пуçне каçăр тытать. Нумайăшĕ Верккана питĕ лайăх хĕр тесе шутлаççĕ. Вăл çынпа тавлашнине, хирĕçнине никам та илтмен. Çынпа вăрçма юратмасть вăл.

Лиска йытă вăрттăн пырса çыртать теççĕ вĕт. Пĕчĕкскер пысăк йытăсене  хирĕç тăраймасть, çынна вĕреймест, çавăнпа вăрттăн хăтланать. Пĕчĕк Верккан ыттисене ăмсанасси пур. Ку енĕпе турри ытларах та тăрăшнă пулас. Мĕн калăн, кашни çынрах ырри те, усалли те хăйне тивĕçтермелĕх пулать тет. Хăш енĕ ытларах аталаннине вара пурăнса курсан кăна пĕлетĕн.

Веркка çын хушшине кĕме юратсах каймасть. Тĕрĕсрех каласан, вăрçакансем ытла хĕрсе çитсен тавлашăва хутшăнкалать, анчах кам хутне кĕмеллине малтанах шухăшласа хурать. Çил майлăн çăмăлрах пулнине чухлама пĕлет мар-и? Пĕр чарăнмасăр сăмах вăркăштарма та ăста çил вăйне туйнă май. Ăçтан пĕлет, ăçтан тулькăш тупать çын умĕнче ырă пулмалли сăмахсене?

Верккăпа Лена заводри пĕр цехра юнашарах ларса ĕçлетчĕç. Вĕсем туссем пулнă тесен те йăнăш мар пуль. Çамрăксен пăшăл-пăшăл сӳтсе явмалли тем таранах. Анчах Лена юлташĕпе сăмах ваклама асăрханма тытăнчĕ: лешне вăрттăн нимĕн калама çук, пĕлнине ăшĕнче тытаймасть, кама та пулин лĕкĕртетсе паратех. Тата калаçма та аптрамалла Верккапа – шурă тенине хура тесе (е  тата урăхла) ăнланать.

Çын сăмахне çеç мар, этем тени хăйĕн вăрттăнлăхне те хăйĕнче нумай вăхăт тытаймасть: çынна çапла туса янă иккен. Анчах хăшĕсем вара çак чăнлăха йышăнмаççĕ. Темиçе çынпа сăмах вакланине никама та нимĕн те каламан тесе шухăшлаççĕ. Пули-пулми е юри вăрçтарма та сӳпĕлтетсе çӳресен те хăйсем пустуй е ятарласа элек сарнине йышăнмаççĕ.

Сăмах пасарĕ камран тухнине ĕненес килмест. Элек серепине лекрĕм текен çын ытларах чух пĕр айăпсăрри çине тарăхса пурăнать: «Вăл каласа панă», – тет. Тĕрĕссипе, ăна-кăна хăех тахçанах таçта та сӳтсе явнă, ăçта кăна мĕн çеç палкаса çӳремен. Хăйне хĕрхенекеннине шыранă. Анчах хăшĕсем куç умĕнче хĕрхеннĕ пек тунă, куç  хыçĕнче вара пач урăхла калаçнă. Кайран вара ĕç-пуç та, сăмах-юмах та тепĕр майлăн çаврăннă. Шаннă кайăк йăвара пулман тет. Час-часах манса каятпăр çав çак чăнлăха. Тус-юлташа шанни – вăл сана юратнине пĕрре те пĕлтермест.

Веркка та çаплах. Çын хуйхи уншăн йĕп пысăкăш те курăнмасть. Кирлĕ пулсан тепĕр майлă хушса калама та ӳркенсе тăмасть. Ленăпа туслашиччен урăх хĕр ачапа юлташлăччĕ вăл. Лешĕн савнийĕ пурччĕ. Ăмсанатчĕ вĕсене Веркка. «Санăн каччуна урăх хĕрпе куртăм!» – тесе ĕнентерет хайхи юлташ хĕрне, мăшăра пĕрле çӳретме пăрахтарать. Кайран тин пĕлет хĕр тусĕ хăйне улталанине. Çакна чăтаймасăр Шупашкарта та тытăнса тăраймасть – тăванĕсем патне Çĕпĕре тухса тарать.

Паллакан пĕр каччă: «Верук-чиперук», – тетчĕ Верккана. Лешĕ тус хĕрне каччинчен сивĕтнине илтнĕ хыççăн чиперук теме мар, Веркка тесе те чĕнме пăрахрĕ. Кайран паллами те пулчĕ.

Пăтăрмахăн çулĕ кĕске, çамрăклăхăн çулĕ анлă: Веркка кĕçех тепĕр каччăпа паллашрĕ. Кун пек хитре те вăрăм-йăрăс пӳллĕ каччă унăн пулман тесен те тĕрĕс. Хĕр пĕрчи вара савăннипе пурçăн çунатлă кайăк пекех пулса кайрĕ. «Çеруш та манăн Çеруш», – текелесе çеç тăрать кашни калаçмассерен. Савăнăçне пула çын паллайми улшăнчĕ телейлĕ пике. Каччăсем çапла вĕсем: е çӳлелле çĕклеççĕ, е аялалла пăрахаççĕ хĕрсене.

Пĕррехинче... Пĕррехинче вара ĕçре Веркка сĕтелĕ

çинчи телефон янăраса кайрĕ. Пĕчченех ларатчĕ вăл – Лена ĕçрен пăрахса кайнăччĕ.

– Мĕнле ĕçпе? Кам кирлĕ? – çĕклерĕ телефон кĕпчекне хĕр пĕрчи.

– Мана Елена Ивановна кирлĕччĕ.

– Эсĕ кам?

– Унпа пĕрле медицина факультетĕнче вĕренекен Борис.

– Вăл пирĕн патран кайрĕ. Ĕçлеме ăçта вырнаçнине пĕлместĕп.

Лена самаях писнĕччĕ юлташĕ шутланакан Верккаран. Хĕрĕн эгоизмне ниепле те хăнăхаймарĕ вăл, çавăнпа çак ĕçре тытăнса тăрас темерĕ. Тусне юри тарăхтарма тенĕ пек университета вĕренме кĕчĕ çитменнине. Уншăн Веркка ăна чĕрĕлле çисе яманни кăначчĕ. Хăй вĕренейменнишĕн такама та тем тума хатĕрччĕ вăл.

Акă хĕвеллĕ ăшă кунсем кĕрхи çумăрлă çанталăкпа улшăнчĕç. Авăн уйăхĕ ылтăн кĕркунне тапхăрĕ пулнине пăхмасăрах çумăр шав лӳшкерĕ. Юпа уйăхĕ вара тĕлĕнмеллипех тĕлĕнтерчĕ – çу кунĕсем каялла таврăнчĕç тейĕн. «Çӳлти таса тĕнчери ют планетăсем çинче пурăнакансем Çĕр çыннисене шеллерĕç пулас», – тесе те кулкаларĕç шӳте юратакансем.

Тап-таса та тип-типĕ, хĕвеллĕ уяр çанталăк. Анчах Веркка ниçта та тухмасть. Унăн савниййĕ килме пăрахнă. Хĕр хуйха ӳкрĕ, чĕмсĕрленчĕ. Каччи авланнă, урăххине качча илнĕ тенине илтсен вара ир те, каç та куççуль тăкма тытăнчĕ. Çынсемпе хутшăнма та манчĕ, тискерленчĕ. Хуйхăпа хуралса кайнă хĕр пĕрчи куççуль айне путсан татах та хăрушăрах курăнчĕ. Пĕлекен чиперккесем ăна хĕрхененçи те тумарĕç, йĕкĕлтекелеме юратакансем шелленçи туса пăхрĕç, теприсем уççăнах кулчĕç: «Вăрăм каччă мĕнпе илĕртнине ăнланмалла. Питĕ кулянан та – ай, çывăрса та кураймарăн-им?» – тесе йĕплерĕç.

Курман паллах. Айван та аскăн хĕр мар вĕт вăл. Хăйне епле тытсан та качча каймасăр савнипе çывăрмалла маррине аван ăнланнă. Тепĕр тесен – çынсене кулса пултăр мар-и? Çук – «телейлĕ» хĕре хĕрхенекен никам та тупăнмарĕ.

Лена та курмăш пуласшăнччĕ тусне. Каç кӳлĕм вăл завода килетчĕ – цех урайне çăватчĕ. Студент пурнăçĕнче кашни пус шутлă. Сĕтел çине пуçне хурса йĕрсе ларакан Верккана йăпатмасан аван мар пек туйăнчĕ ăна.

– Ан йĕр-ха çаплах. Пурте сан çине пăхаççĕ. Аван мар.

– Пăхччăр, кулччăр! Кулаканĕ хăй те йĕрĕ. Эпĕ те ыттисене пайтах ура хунă. Ман пата та çаврăнса çитрĕ. Çав кирлĕ мана!

Çынна тарăхтарни каялла килет имĕш, хăйнех такăнтарать. Тĕрĕсех калаçрĕ Веркка, хăй вара Ленăран каçару та ыйтмарĕ. Лешĕ цехри çынсем умĕнче уншăн аванмарланнăран, куççуль ăшне путнă хĕр пĕрчине часрах çын картне лартас тесе:

– Манса кай ăна. Урăххине тупан, каччă пĕтмен-ха тĕнчере. Эпĕ сана каçарнă тесе шутла та ыран туя пыр.

– Мĕнле туя?

– Пирĕн туя. Ыран эпир Бориспа çырăнатпăр.

– Мĕн?! Эсĕ те-и? Юри калатăн-и, манăн чун ытларах ыраттăр тетĕн-и? Сана качча илекен те пур-и? Кай кунтан! Кураймастăп сана! Чăтма пултараймастăп!

Верккан хуйхине çăмăллатас тесе сăмах чĕннĕ Лена чĕрине амантрĕ – кăкăрĕнчен çĕçĕпе чикнĕ пекех янрарĕç хĕр пĕрчин сăмахĕсем. Усалскер татах та тем каласа пĕтересрен, сăмахĕпе тĕп тăвасран хăранăран часрах айккинелле пăрăнчĕ Лена. Умри телей çути вара унăн чунне йăпатса ăшăтрĕ.

Çуралаççĕ вĕт-ха çавнашкаллисем – çынна ăмсанаканнисем. Ĕмĕр тăршшĕпе хăйсем тертленеççĕ, çынна нушалантараççĕ.

Çава туптамасăр çивĕчленмест, ача вĕренмесĕр ăслă пулаймасть.

**К.ВИШНЕВСКАЯ**

# Çырăнтару! Çырăнтару – 2015!!!

*Мана арăм юратать,*
*Юрласа кăна пурнать.*
*Мăшăр питĕ савăннă –*
*Эпĕ «Самант» çырăннă!*

*Каччăсем килсех тăраç,*
*Тĕпелех кĕрсе лараç.*
*«Самант» журнал пит вулаç,*
*«Спаççип!» – тесе хăвараç.*

*Оборона министерстви*
*Мĕншĕн «Самант» çырăнмасть?*
*Журналсăр манăн савни*
*Автомат та йăтаймасть!*

*Хĕрсем, тăвас «Хура список»*
*Ăçта качча тохас мар,*
*Ялĕ начар, шокăр-макăр –*
*«Самант» çырăнакан та çок!*

*Ма-ке савни ютшăнан?*
*Ма-ке пăрахса таран?*
*«Самант» çырăнатăпах –*
*Реабилитаци тăвапах!*





# "Çур çĕр иртни пĕрреччен "Ирхи кăмăл" валли çын шыранăççĕ"

***Кунсеренех вăл чăваш халăхне ырă ир сунать, хаваслă кăмăл парнелет. Кăнтăрла каллех ăшă саламсем вуласа, илемлĕ юрă-кĕвĕпе савăнтарса радио итлекенсен чун-чĕрине ăшăтать. Çынсен пурнăçне çутă кĕртмех çуралнă тейĕн вăл çĕр çине. Çакна тӳрĕ эфира шăнкăравласа çитекенсен тав сăмахĕсенчен туйса илетĕн.***

***Ирина Николаева сцена çинче те палăрма ĕлкĕрчĕ. Çутă та таса шухăшлă юррисемпе вăл кашни этем чĕринче ырăлăх вăратасшăн, самантлăха та пулин чуна канăç паман пулăмсем çинчен мантарасшăн.***

***Тепĕр чухне пăрчăканпа танлаштарас килет ăна: кĕске вăхăтрах темĕн те туса ĕлкĕрет-çке, таçта та çитет. «Телевиденипе кăтартакан леш Energizer батарейкипе ĕçлемест-ши вăл?» – текен шухăш та çуралать хăш чухне. Тем юптарса ларар марха, сăпайлă та пултаруллă Иринăна хăйне сăмах парар.***

***– Ирина, эсĕ ача чухне мĕн çинчен ĕмĕтленнĕ? Çав вăхăтри шухăшсемпе паянхи пурнăçу пĕр килеççĕ-и? Урăхларах каласан, ĕмĕт пурнăçланчĕ-и?***

– Кирек мĕнле ĕçре тăрăшакана та пĕчĕкренпех хисеплесе ӳснĕ эпĕ. Анне те пĕрмай: «Ĕçрен, вăл темĕнле таса мар пулсан та, вăтанма кирлĕ мар, ĕçлемесĕрларнинчен вăтанмалла», – тесе калатчĕ. Тĕлĕнмелле те, сыватмăша кайсан тухтăр пулас килетчĕ. Шкула çӳреме пуçласан вара вĕрентекен ĕçĕ илĕртетчĕ. Иккĕмĕш сыпăкри аппа журналист пулнă май район хаçатĕнче «Ӳссен кам пулăн?» статья пичетлесе кăларнăччĕ, шăпăрлансен çутă ĕмĕчĕсемпе паллаштарнăччĕ. Ун чухне эпĕ: «Ӳссен тухтăр пулас тетĕп. Вĕсем шурă халатпа çӳреççĕ. Яланах тирпейлĕ те ăшă кăмăллă», – тесе хуравланăччĕ. Аппа маншăн çывăх та юратнă çын, мĕн пĕчĕкрен унран тĕслĕх илсе ӳснĕ эпĕ. Çавна пулах унăн çулĕпе каяс терĕм пулĕ.

***– Эсĕ хăй вăхăтĕнче «Тантăш» хаçатпа туслă пулнă вĕт-ха? Вăл санăн пурнăçунта мĕнле те пулин çутă хăварчĕ-и?***

– Пиллĕкмĕш класра «Тантăш» хаçатпа туслашрăм. Кĕçнерни кун çитессе еплерех кĕтеттĕмччĕ! Чи юратнă кунччĕ вăл маншăн. Заметка пичетленсе тухсан вара савăнăç чикки те пулман. Хаçат ĕçченĕсене тав сăмахĕ калас килет, республикăн паллă çыннисем çинчен пĕлме тата тавра курăма анлăлатма пулăшрĕ юратнă «Тантăш». «Самант» журнала та алăран яман. Каярах районта тухса тăракан «Каçал ен» хаçатпа туслашрăм, журналист ĕçне чунтан килĕштертĕм. Çак хаçатсемпе туслă пулни мана пуласлăхра питĕ пулăшрĕ. Çавăнпа та шкул хыççăн ăçта каяс шухăш пĕрре те пăшăрхантарман. Пĕр ĕмĕт-тĕллевпе çеç пурăнаттăм.

***– Радио пурнăçне мĕнле хăнăхса кĕрсе кайрăн? Йывăрлăхсем тухмарĕç-и? Кулăшла е чăрмавлă самантсем те пулкалаççĕ пуль хăш чухне?***

– И.Я. Яковлев ячĕллĕ Чăваш патшалăх педагогика университетĕнче пĕлӳ пухнă вăхăтра Чăваш Ен наци радиовĕпе туслашрăм, каярах кунта ĕçлеме те илчĕç. Кирек мĕнле ĕçе те юратса, чун ыйтнипе пурнăçламалла тесе шухăшлатăп.

Эфира пĕрремĕш хут тухнине ас тăватăп. Алена Терентьевăпа Мальвина Петровăна тав сăмахĕ калас килет! «Чĕререн тухакан сăмахсем» кăларăма ертсе пыма вĕсенчен вĕренсе пытăм. Пĕрремĕш эфиртанах килĕшрĕ, ку кăларăм чуна çывăххине туйрăм. Паянхи кун та кашни радиоитлекен савăнăçĕ хамăнни евĕрех

туйăнать, вĕсен телейне пĕрле пайлатăп.

Паллах, йывăрлăхсăр пулмасть. Кун пек вăхăтсенче вара хама лăплантарма тăрăшатăп. Юратнă аттепе анне те яланах хавхалантараççĕ. Çĕнĕ çул кĕтсе илсессĕн кашни кунах виçĕ сехет хушши тӳрĕ эфирта ăшă саламсем йышăннине те, çур çĕр иртни пĕрреччен «Ирхи кăмăл» валли хăна шыранине те, каçхи тăххăрччен кăларăм хатĕрленине те йăл кулăсăр аса илейместĕп.

Чăрмавлă лару-тăру та пулнăччĕ. Пĕррехинче туспа Алексей Шадриков концертне кайма калаçса татăлтăмăр. Кăларăм валли сценари çырса пĕтертĕм, анчах та сыхласа хăвариччен çак документ таçта çухалнă. Концерта çитсе курасси пулмарĕ. Ун вырăнне çĕнĕрен сценари çыртăм. Паллах, кăмăл пусăрăнчĕ. Юрать-ха, тус ăнланчĕ мана. Тепĕр кунне эфира хатĕрленмесĕр тухаймастăн-çке. Çынна ырă тăвас, май пур таран пулăшас килет. Радиоитлекенсем телей суннă чухне çунатлансах каятăп, нимĕнле йывăрлăх та хăратмасть пек туйăнать. Нумаях пулмасть Куславкка районĕнчи Вăрасăр ялĕнчен саламлă çырупа килчĕç те май пур таран çыру хатĕрлеме пулăшрăм. Каярах юбилярăн кинĕ: «Тавах ырă кăмăлушăн, Турă пулăшса пытăр сана», – терĕ. Темĕнрен те паха çак сăмахсем.

***– Юрă тĕнчи вара сана мĕнле майпа çавăрса илчĕ? Сана «Эмине» ушкăнра куратпăр вĕт-ха? Пĕччен шăрантаракан юррусене те радиопа час-часах илтме пулать.***

– Юрă-кĕвĕ маншăн – чун ăшши, чун илемĕ. Хурлансассăн та, савăнсассăн та кăмăла çапла уçатăп. Юрă-кĕвĕ тĕнчипе туслашни ахаль пулса иртмерĕ пулĕ. Манăн асаттен аппăшне нумайăшĕ Маюк аппа пек пĕлет. Унăн юррисем Чăваш радиовĕпе пĕрмаях янăранă, хăйĕн сассипе çынсене савăнтарнă вăл. Çавăн пекех асаннен пиччĕшĕ те пултаруллă купăсçă пулнă. Вĕсен ачисем Ольгăпа Михаил Луковсем те юрăçсемех.

Надежда Заводскова ертсе пыракан «Эмине» фольклор ушкăнне те ăнсăртран лекрĕм. Халăх юррисем чуна çывăх пулнăран çак ушкăнра юрлама пуçларăм. Хамăн репертуар та пур. Хуть те мĕнле чухне те сăпайлăх яланах малта пулмалла тесе шухăшлатăп. Пурнăçра мĕнле, сцена çинче те çаплах эпĕ.

***– Радиоитлекенсенчен нумайăшĕ санăн çепĕçлĕхӳнтен тĕлĕнет. «Мĕнле хитре те ăшă кăмăллă калаçать çак Ирина Николаева», – текен чылай. Чăнах та, мĕнле-ха эсĕ яланах çапла йăваш пулнетĕн? Тарăхма пултаратăн тесе никам та калас çук. Ытти чухне те çавăн пек-и эсĕ? Е хăвна алăра тытма çук самантсем те пулаççĕ?***

– Çепĕçлĕх пирки калас пулсан ку ен аннерен куçнă пулĕ. Анне пирĕн çине нихăçан та сасă хăпартса калаçса курман. Страхлакан компанире агент пулса ĕçленĕ май пĕрмаях çынсемпе ĕçлеме тивет унăн. Пуринпе те ăшшăн калаçать вăл. Эпĕ унран тĕслĕх илсе ӳснĕ. Халĕ кирек хăçан та аннепе калаçса чуна лăплантаратăп. Пурнăçра, паллах, тĕрлĕрен пулать. Кулянмалли, тепĕр чухне тарăхмалли сăлтав та тупăнать. Кун пек чухне чиркĕве кайса килетĕп, çурта лартса Турăран пулăшу ыйтатăп. Чăннипе вара, йывăр чухне çеç мар, Турă пирки пĕр самант та манмастăп, ăна ĕненетĕп. Пиччен хĕрĕ пĕринче мана: «Санăн аннӳпе аçу шкулта ĕçлеççĕ пулĕ, пĕр усал сăмах та илтсе курман-çке санран», – тесе каласа култарнăччĕ. Чăннипе вара, атте те, анне те шкулта ĕçлемеççĕ. Атте Мускава ĕçлеме çӳрет, анне «Росгосстрах» компанире – 28 çул.

***– Ирина, пĕррехинче санăн тăван шкулунта, Комсомольски районĕнчи Анат Тимĕрчкассинче, пулма тӳр килнĕччĕ. «Кавказ тыткăнĕнчи хĕр» фильмри пекех ырлаççĕ сана унта: «Ăслăскер, хастарскер, спортпа туслăскер тата питĕ илемлĕскер!» Эсĕ спортпа та туслă иккен...***

– Спортпа пĕчĕкренпех туслă. Чупнă, йĕлтĕрпе ярăннă, каярах ирĕклĕ майпа та кĕрешнĕ. Кашни шăмат кун-вырсарни кун пĕр-пĕр ăмăрту пулнăран ирхине тул çутăлнă-çутăлман шкула утнă чухне: «Хăçан çывăрса тăранăп-ши?» – тесе шухăшлаттăм. Анчах та çĕнтерӳ хыççăн малалла та малалла тăрăшас килетчĕ. Валерий Иванович Плешков вĕрентекенпе Валерий Хрисанович Денисов тренера тав сăмахĕ калатăп.

***– Илемлĕх конкурсĕсене те хутшăннă пуль-ха?***

– Шкулта хутшăннă, «Шкул мисĕ» ята илнĕ, малалла хутшăнма кăмăл туман, вăл шая çитеймен эпĕ. Çавăнпа илем конкурсĕсене хутшăнма вăтанатăп.

***– Кăçал эсĕ республика Пуçлăхĕн стипендине виççĕмĕш хутчен илетĕн-и-ха? Стипендиат пулас текенсене мĕнле сĕнӳ-канашпа пулăшма пултаратăн?***

– Республика Пуçлăхĕн стипендине шкулта тата университетра вĕреннĕ вăхăтра виçĕ хутчен тивĕçрĕм. Паллах, ăна кирек кам та илме пултарать. Чи кирли, ĕмĕт-тĕллев пулни, ăна пурнăçлама пултарни. Тăрăшсан, ĕçлесен – стипендиллĕ пулаятăн. Çавăнпа та çамрăксене çирĕп вăй-халпа ăнăçу сунас килет. Ан ӳркенĕр, кирек мĕнле ĕçе те хаваспах пуçăнăр, лайăх вĕренĕр, вăхăта усăллă ирттерме тăрăшăр.

***– Сан çине пăхатăн та, эсĕ яланах телейлĕ курăнатăн, пурнăça юратни тӳрех сисĕнет. Сана кам çавăн пек хавхалантарать-ха?***

– Аттепе аннене тав сăмахĕ калас килет. Ăнланаççĕ вĕсем мана, пулăшаççĕ. Вĕсен пит-куçĕ телейпе çиçни маншăн чи пысăк савăнăç! Аппапа пичче сывă пулни – чи хаклă тупра!

***– Кашни этемĕн мĕнле те пулин тĕллев пулмаллах тетпĕр. Санăн та пурах ĕнтĕ вăл?***

– Çемьеллĕ пулса мăшăрпа телей туптас килет, ачапăчаллă пулса çемьешĕн пурăнас килет! Пурте çакăншăн тĕнчене килетпĕр пулĕ тетĕп. Телей курма, ыттисене ырă тума!

***– Ирина, тавах кăмăллă калаçушăн! Таврара пурте сан пек пулсан çĕр çинчех çăтмах пуçланĕччĕ, усал мĕнне те пĕлмен пулăттăмăр. Çынна сунакан ырăлăху сан пата пин хут ытларах таврăнтăр. Мĕн ĕмĕтленни йăлтах пурнăçлантăр!***

**Лариса ПЕТРОВА**



# Пугачев туприсем

***1773 çулхи çу уйăхĕ. Хусан тĕрмине хупса хунă Емельян Пугачев ирĕке тухса тарма мехел çитерет. Туркка вăрçинче хорунжий (пехотăри подпоручикпе, утлă çарти корнетпа танлашать) званине илнĕ, Балти тăрăхĕнче, Çĕнĕрте тĕнче каснă хастар казак Яик (Урал) юхан шывĕ çине вĕçтерет. Унти халăха хăйне III Петĕр патша – Петр Федорович император – тесе пĕлтерет. Каварлă Екатерина арăмĕ вĕскĕртсе янă пуç касансенчен асамлă майпа çăлăнса юлма пултарнă «III Петĕр патша» авăнăн 17-мĕшĕнче саккунлă влаçа каялла тавăрма пăлхав çĕклени çинчен манифест кăларать.***

Православин кивĕ йăли-йĕркипе пурăнакан казаксем хапăл тусах йышăннаççĕ Пугачев чĕнĕвне. Вĕсем тавра Яик-Атăл хутлăхĕнчи «ют юн» халăхсем те йышлăн чăмăртанаççĕ. Татищев хула-карман патĕнчи ăнăçсăрлăх хыççăн пăлхавçăсем Атăл çине каяççĕ, Хусана илеççĕ.

Халăх асĕнче Пугачев-Пăкача, Разин пекех, ăрăмçă евĕр сăнарланса юлнă. Юм-сумĕ унăн, Çтаппанпа танлаштарсан, çапах та хавшакрах. Ĕмĕр маларах пăлхав çĕкленĕ Разин пекех, хавхасенче Емельян Иванович шутсăр нумай мул-тупра пытарса хăварнă. Енчен те Степан Тимофеевичăн пĕр пус укçине те никам та тупайман пулсан, Емельян Иванович тупри мĕлкеллĕ çеç мар, чăн нухратлă та. «Император» мулне XIX ĕмĕрте – 1840-мĕш çулсенче тупнă çынсен ячĕсене те калаççĕ. Оренбурга кайма тухнă пĕртăван Александрпа Степан Гусевсем çĕр каçма Синегорка ялне чарăннă. Киле янă пўрте кĕрсен кăмака çинче суккăр карчăк выртнине курнă вĕсем. Пĕртăвансем калаçăвĕнчен çак карчăк çул çўрекенсем мосолсем – Мосолов заводĕнче ĕçленĕ çынсен тăхăмĕсем – пулнине ăнкарать.

– Эсир Кананикольскийĕнчен-и? – ыйтать вăл.

– Çук, эпир Гусевский хуторĕнчен, – хуравлаççĕ лешсем.

– Кĕçĕн Ик çырми хĕрринче-и? Ямашлы çырми вăрри патĕнче.

– Тĕрĕс! Ăçтан пĕлетĕн? – ыйтаççĕ пĕртăвансем.

– Эпĕ çамрăк чух Пугачевпа çўренĕ, унăн патĕнче апат пĕçерекенни пулнă. Иргизлу çулĕ çинче пире Сакмар казакĕсем хăваларĕç. Ямашлы вăрри патĕнче, çырма сулахай çыранне Пугачев ылтăн пытарса хăварма хушрĕ, – ăнлантарнă карчăк. Çапăçу хыççăн чакнă чух Гусевский хуторĕ патĕнче мул пытарса хăварнине курнă иккен вăл.

Пĕртăвансем карчăк сăмахне ĕненнĕ. Пугачев мулĕ пирки малтан та сăмах-юмах илтнĕ вĕсем, халĕ вара куртамăш (свидетель) та тупăннă, пуянлăха ăçта пытарнине те пĕлтернĕ вăл. Аслă тетĕшĕ – Александр – çĕрлене пăхмасăр каялла çула тухать. Чăнах та пытарнă ылтăна тупать вăл, анчах никама та каламасть. Александрăн кĕçĕн тетĕшĕпе ашшĕ те мул шырама пуçлаççĕ – нимĕн те тупаймаççĕ. Асли вара укçипе пĕлсе усă курать, пус çумне пус хушсах пынă тет.



Çак хавхара хальхи Пушкăртстанри Зилаир, Кугарчин, Баймак районĕсенчи ялсене асăннă. Шурă Атăл хĕрринчи Иргизли ялĕ патĕнче Пугачев сăрчĕ пур. Емельян Иванович çарĕнчен тарнă чухне пăхăр шăратакан Вознесенск завочĕн управляющийĕ çав ту çине мул чавса чикнĕ тет. Пугачевăн хастар полковникĕ Салават Юлаев та Карабашшарта (халĕ Тутарстан Республикинчи Карабаш) вицĕ лав кĕмĕл укçа чавса пытарни пирки калаççĕ. Пушкăртстанра Пугачев мул-тупри пирки халап нумай çўрет – пурне те асăнса тухаймăн.

Оренбург патĕнче те вăрттăн вырăн тупни пирки калаççĕ. Тискер шырлан текен вырăнта Рассыпная ятлă авалхи карман çумĕнче тет вăл. Куртамăшсем ĕнентерне тăрăх – мул шырама килнисен ятарлă хут пулнă тет, çавăнта ылтăн ăçтине тĕп-тĕрĕс кăтартнă имĕш. Çак тăрăхра тата тепĕр вырăн та пур тет – унта питĕ нумай ылтăн иккен. Анчах тĕлне тĕрĕс пĕлменрен хальлĕхе никам та тупайман ăна.

Урала юхса кĕрекен Ящурка çырми вăррине те пытарнă тет мул. Вăхăт иртнĕ май юхан шыв типсе ларнă, çыранĕсем улшăннă – ориентирсем çук. Оренбург тăрăхĕнчи Татищев крепоçĕнчен инçех мар Банна кўллине те пăлхавçăсем кĕмĕл тата пăхăр укçа тултарнă темиçе пичĕке пăрахнă имĕш. Кайран ўркенмен çынсем темиçе пичĕкине тупнă та тет.

XX ĕмĕрти 70-мĕш çулсенче Анатолий Малахов ăсчах тата çыравçă-фантаст малахит шкатулка тупăннă. Пĕррехинче вăл вăйлă пысăклатакан лупăпа çак шкатулкăна пăхнă чух тĕлĕнмелле ўкерчĕк асăрханă: шыв хĕрринче сăртсем, авалхи çи-пуç тăхăннă çынсем. «Тавату» тата «кладъ» тесе çырни те пур.

Екатеринбург çывăхĕнчи Таватуй кўлли патĕнче юхса иртекен Чусовой çырми çыранĕнче пытарнă ылтăн картти ку тесе ăнлантарнă Анатолий Малахов шкатулка ўкерчĕкĕн вăрттăнлăхне. Анатолий Алексеевич Чусовой хĕрринче мул пуррине кăтартакан паллă та тупнă тет, биолокаци рамкки çакăнта металл нумаййине палăртнă. Пугачев тупри çинчен Анатолий Алексеевич «Наука тата пурнăç» журналта статья та пичетленĕ. Çакăн хыççăн вара тĕпчевçĕ сасартăк вилет. Сарăмсăр вилĕм хыççăн Пугачев мулĕ Чусовой хĕрринчи хăш сăрт айĕнче упраннине çырнине те тупаймаççĕ, малахит шкатулка та çухалать.

Вятка юхан шывĕ (Нухрат Атăл) те III Петĕр патша туприне пытарса усрать – Киров облаçĕнчи Фален районĕнче упранать тупра. Вятка кĕпĕрнинчи (халĕ Киров облаçĕ) пĕр хресчен XIX ĕмĕр вĕçĕнче пуянлăх пытарни çинчен калакан чул тупнă. 1774 çулта 56 пин тенкĕлĕх ылтăн укçа, 44 пин тенкĕлĕх кĕмĕл чавса пытарнă тесе çырнă унта. Çак чула шăп та лăп ăçта тупни паллă мартан пытарнă пуянлăха шырама ориентирсем илме май çук.

Волгоград облаçĕнчи Лесной Карамыш ялĕ патĕнче пытарнă мул пур иккен. Çак облаçри Пугачевская станица таврашĕнчи пĕр сăрт айĕнче вара III Петĕр патшан ылтăн кăшăлĕ – Петр Федорович императорăн корони выртать тет.

Емельян Ивановичăн Атăлçири паллă мулĕсенчен

пĕри – Саранск патĕнче пытарнӑ пуянлӑх. Ӑна мĕнле тупмаллине çырса кӑтартни те пур, анчах çав вырӑна ялан сухаланӑран мĕнле шырамалли паллисем çухалнӑ.

III Петĕр император пытарнӑ мул-тупран чи паллӑ вырӑнĕсен шутне Чӑваш Республикин Сĕнтĕрвӑрри районĕ те кĕрет. Емельян Ивановичӑн пысӑк мул-тупри Чӑваш Енре упранать тени – пустуй сӑмах тесе калаймӑн. 1774 çулхи утӑ уйӑхĕн 12-мĕшĕнче Пугачев отрячĕсем Хусана штурмлаççĕ, хула кремльне илеймеççĕ. Каçпа пӑлхавçӑсене Арск хирĕнчен И.Михельсон подполковник корпусĕ хирсе кӑларать. Утӑн 15-мĕшĕнче Хусаншӑн татӑклӑ çапӑçу пулса иртет – Иван Михельсон Пугачев çарне аркатса тӑкать. Емельян Иванович 300 юлан утçӑпа Кокшайск патне тарать. Унтан Атӑлӑн сылтӑм енне каçать.

Кайран, Мускавра асаплантарнӑ чухне, Пугачев Хусан патĕнчен 10 миллион тенкĕне яхӑн вуннӑлӑх ылтӑн укçа илсе кайнине пĕлтернĕ. Атӑл урлӑ каçсан Аслӑ Сĕнтĕр (Сĕнтĕрвӑрри, Мариинский Посад) патĕнче пытарнӑ пулать вӑл çав мула. Допросра Пугачев тĕрĕсне каланӑ теççĕ, çавӑнпа 10 миллиона яхӑн ылтӑн укçа Сĕнтĕрвӑрри таврашĕнче халĕ те упранни пирки хура чавансем те, историксемпе археологсем те пулма пултарать тесе йышӑнаççĕ. Атӑл хĕрринчи Государь тӑвĕ таврашне тата Спиртзавод патĕнчи Хура Çырмана чӑн малтан тĕрĕслемелле теççĕ.

Емельян Ивановичӑн пурнӑçĕн вĕçĕ синкерлĕ. Авӑнӑн 5-мĕшĕнче Царицынран 100 çухрӑмри Хура çыр çывӑхĕнчи Соленик эшкерĕ патĕнче пӑлхавçӑсен çарне тĕппипех аркатса тӑкнӑ. Сутӑнчӑк казак полковникĕсем Пугачева 100 пин тенкĕлле тытса панӑ, аслӑ пӑлхавçӑна Мускава тӑвӑр тимĕр читлĕхре илсе пынӑ, 1775 çулхи кӑрлачӑн 10-мĕшĕнче (хальхи стильпе 21-мĕшĕнче) Пугачевӑн тата унӑн çывӑх пулӑшаканĕн Афанасий Перфильевӑн пуçĕсене, ал-урине Шурлӑх лапамĕнче касса пӳкленĕ. Тепĕр виçĕ пӑлхавçӑна – М.Шигаева, Т.Подурова тата В.Торнова Мускавра халӑх умĕнче çакса вĕлернĕ. И.Зарубинӑн (Чика-Зарубин) пуçне вара Йĕпхӳре каснӑ. Афанасий Перфильев хыççӑн – официаллӑ документсем кӑтартнине ĕненсен – Раççейре ал-ура-пуç касса никама та тек пӳклемен.

Пугачев пӑлхавĕпе çыхӑннӑ интереслĕ фактсем:

– Пугачев çарĕ пĕр кун хушшинче Хусана çаратса çунтарса янӑ хыççӑн II Кĕтерне патша-майра хӑйне Хусан помещици тесе пĕлтернĕ: пӑлхавçӑсенчен шар тӳснĕ Хусан кĕпĕрни дворянĕсене çапла майпа – сӑмахпа та пулин хавхалантарас тенĕ;

– пӑлхав пуçлансан правительство Емельян Ивановичӑн тӑван килне çунтарса яма, вӑл çуралнӑ Зимовейская станицӑна Потемкинск ят парса урӑх вырӑна куçарма хушнӑ. Зимовейская станицӑра Пугачевран маларах тепĕр паллӑ пӑлхавçӑ Степан Разин 1630 çулта çуралнӑ (халĕ – Волгоград облаçĕнчи Котельников районĕнчи Пугачевская станица);

– Пугачев пӑлхавне пула Яик юхан шывĕ те шар курнӑ: 1775 çулта ӑна Урал ят панӑ. Емельян Ивановича пулӑшнӑ Яик казакĕсен çарне Терек çине куçарнӑ. 1775 çулта Запорожская Сечь та пĕтсе ларнӑ – кӑмӑлсӑр казаксем влаçа хирĕç çĕкленме пултарасса шута илсе ӑна та пӑрахӑçланӑ.

– хӑйне III Петĕр патша тесе чӑн малтан Федот Богомолов (Казин) казак йышӑннӑ. 1772 çулта Моздокра казаксем Казина Петр Федорович император тесе каланӑ. Кайран ӑна Царицын тĕрмине хупнӑ, çавӑнпа Федот Богомолов «Царицынри Петр» ятпа паллӑ. Судра йышӑннӑ тӑрӑх, хӑйне III Петĕр патша тесе вӑл ӳсĕрле каланӑ, малашне çак ятпа усӑ курас темен. Федот Богомолова халӑх умĕнче чӑпӑрккапа хĕненĕ, сӑмсине çурса çĕмĕрнĕ, вара пичĕ çине хĕртнĕ кĕлем лартнӑ.

– Паллӑ çар пуçĕ Александр Суворов Пугачева Яицк хулинче ыйтса тĕпченĕ. Емельян Ивановича Чĕмпĕре илсе кайма хурал ушкӑнне йĕркелекенĕ, икĕ тупӑпа хĕç-пӑшалланнӑ хурала ертсе пыраканĕ те хӑех – Суворов генерал-поручик пулнӑ. Самартан 40 çухрӑмри Мосты ялĕнче çĕр каçнӑ чух пушар сиксе тухнӑ. Çавӑн чухне Пугачева читлĕхрен кӑларнӑ та ывӑлĕпе пĕрле урапаран çыхса хунӑ. Вĕсене çавӑн чухне çĕрĕпе куç хупмасӑр Суворов хӑй хуралланӑ.

– Пугачевӑн пĕрремĕш арӑмне Софья Дмитриевнӑна тата Трофим, Аграфена, Христина ачисене, иккĕмĕш арӑмне Устинья Петровнӑна Кексгольск крепоçĕнче тытса усрамалла тунӑ.

**Ускатум КУНЦУЙ**

# Вут пике

***Пĕр хĕр пĕрчи «Самантӑн» иртнĕ номерĕнче хӑй тропикре пурӑнманшӑн, çу кунĕсемпе чунтан киленсе ĕлкĕрейменшĕн питĕ кулянниине çырса панӑччĕ. Ӑнланатпӑр ӑна: хамӑр та çавӑн пекрех. Тропикра пурӑнакансене вилсе каясла ӑмсанакан хĕр пĕрчи çав-çавах ман шая аталанса çитеймен-ха тесе пĕтĕмлетӳ тума тиветех. Манпа танлаштарсан, вӑл чиперкке – чӑн-чӑн Юр пике!***



Тем пулчĕ кӑçал, тем пырса пӑтратрĕ чункӑмӑла. Мĕн-мĕн те, кӑçал вара çулла нихӑçан та вĕçленес çуккине вӑтӑрти ни çамрӑк, ни ватӑ пуçпа тытрӑм та ĕненсе лартрӑм. Çулла вĕçленни, сивĕ кунсем çумӑрланни пулма пултараймасть! Урамра сар хĕвел мĕнле ачаш, шӑнасем пин çул пурӑнакан вилĕмсĕр кӑпшанкӑсем пек мĕнле хӑюллӑн сĕрлесе вĕçеççĕ. Килте шкапра ӑшӑ тумтир çакӑнса тӑни мĕнле кулӑшла тата! Таçта çити тирпейлесе пуçтарса чикрĕм хĕлле тӑхӑнмалли япаласене. Вçо! Çанталӑка улӑштартӑм тесе вӑрттӑн шанса пурӑнма тытӑнтӑм. Çумӑрсем çукаларĕç – çанталӑк сивĕтмерĕ. Ни çамрӑк, ни ватӑ 30-ти пуçпа чутах ĕненсе лартататтӑмччĕ çӳлти турӑ манӑн ĕмĕтшухӑша илтрĕ тесе!

Каçсем сулхӑнланчĕç, кунсем кĕскелчĕç. Çут çанталӑкра кĕр сӑнĕ уççӑнрах та уççӑнрах палӑрма тытӑнчĕ. Кайӑксем вĕçсе кайрĕç, ачасем шкула таврӑнчĕç.

Ахаль çеç, йĕкĕлтесе тенĕ пек, çут çанталӑк темле ултав чаршавĕ витĕр пире çулла чӑнахах та пулчĕ тесе суйса кӑтартрĕ пуль. Эпир пурте улталаннӑ!!! Пулмарĕ иккен асамлӑх савӑкне курасси те туясси – çуллан кĕтретне тӑсасси... Эпĕ Хĕл Мучин йӑмӑкĕ Юр пике пулманнине мĕнле ӑнланмалла мар çут тĕнчен? Вут пике эпĕ, вут кайӑк. Хӑçан каллех çулла çитет-ши?!



Илемлĕх шкулĕ

# Чиперлĕх кĕтречĕ-2

## Ырă пурнăç сире, хаклă пикесем тата хĕрарăмсем!

***Паянхи урокра тумтир çинчен калаçар. Эпир мĕн тата мĕнле тăхăнни нумай фактортан килет: миçе çулти, мĕн ĕçлени, социаллă статус, пурнăç йĕрки, хăвна мĕн килĕшни, камсемпе туслă пулни, ассоциативлăх саккунĕн витĕмĕ, чунри «Эпĕ» тенипе çи-пуç мĕнле шайлашăнни, оригиналлăх тата мода сĕнĕвĕсене итлени, мĕнле лару-тăрура ытларах пулни, мĕнле тумтир чăнахах та кирли (пулсан – пăсмасть текенни те).***

***Асăнса-шутласа тухнисене тĕплĕнрех шĕкĕлчер. Хăвăрăн сăнарлăхăра калăплас тетĕр пулсан çаксене шута илĕр.***

### 1-МĔШ ПРАВИЛО

Хăш çĕрте (ăçта тата камсемпе) тăтăшрах пулнине, вăхăт мĕн таран лăпкă е хăвăрт иртнине, хăвăн пурнăç йĕркин тытăмне, камсемпе ытларах хутшăннине палăртмалла. Урăхла каласан – эсĕ камсене «тĕлĕнтересшĕн», витĕм кӳресшĕн пулнине уçăмлатмалла. Тумтир мĕн таран меллĕ тата мĕн таран «темăпа килĕшӳллĕ» – çак туйăма инстинкт шайне лартмалла.

Çакăн чухне ассоциативлăх саккунĕн пуç пулса тăмалла – çынсем пирĕн çине пăхчăр та вĕсен чунĕнче хамăра кирлĕ ассоциацисем вăранччăр. Пурнăçра (килĕшет-и – килшмест-и хăвна) ыттисен кăмăл-тутине (вкусы) шута илмеллех. Сăмахран, çамрăк секретарша ĕçе çара хырăмпа килчĕ. Хĕрĕ йăрăс пĕвлĕ, хырăмĕ çатма пек: килĕшӳлĕх саккунĕпе пурте шайлашуллă. Тепĕр саккун – дресс-код – тăрăх вара, енчен те пике ĕç пусмипе çӳле çĕкленесшĕн пулсан, кунашкал тăхăнни ытлашшипех. Пĕрремĕш тĕл пулăва каякан хĕр-упраçăн та çак правилăна шута илмелле: мĕн тăхăнмалла та мĕнлерех курăнмалла, вăл ман пирки мĕн шухăшлĕ-ши?

Енчен те эсир мĕнле те пулин эффектпа тыткăна илес кăмăллă тăк, ăна малтанах хатĕрлемелле, программăламалла.

### 2-МĔШ ПРАВИЛО

Хăв калăпланă сăнарлăх чунри «Эпĕ» тенипе адекватлăн шайлашăнмалла. Хăвна хакласси çавăнпа объективлă пулмалла. Çакна ăнланмалла: эсĕ чунпа романтик-и (вара сана романтикăллă стиль килĕшӳллĕ) е спортивлă хĕр-упраç? Тен эсĕ калама çук тĕплĕ (педант), типтерлĕ çын? Хăрушла оригиналлă, супер-пупер тум тăхăнма хевте çитет-и?

Халĕ эпир чун-кăмăл туйăмĕ пирки калаçрăмăр. Сăнарлăхра ӳт-пӳ кăтартăвĕсем çинчен те манмалла мар. Çӳллĕш, мĕнле кĕлеткеллĕ, йывăрăш, мĕнлерех пропорцисем – пурте витĕмлĕ те пĕлтерĕшлĕ. Тумтир стильне суйланă чух çын мĕнле утнине, кĕлеткине мĕнле тытнине, аллисене мĕнле суллани таранах шута илмелле. Атă-пушмак виçи те хăй майлă, пысăк уралла пулсан романтика стилĕ пит каймасть, спорт сĕмлĕ атă-пушмак вара вырăнлă.









## 3-МĔШ ПРАВИЛО

Хӑй евӗрлӗх (оригиналлӑх) вырӑнӗ. Имиджӑн чи аслӑ тӗллевӗсенчен пӗри – йыш-пӗрлӗхрен уйӑрӑлса тӑрасси. Мӗнпе те пулин оригиналлӑ пулмаллах хӗрупраҫӑн.

Ыттисем пек пулманни – питӗ те питӗ кирлӗ. Вак-тӗвекре те пулин хӑвӑр евӗрлӗ пулӑр – ҫухана кӑшт хӑпартнӑ-и е калпака чалӑш тӑхӑнни-и, тен, шарфа урӑхла ҫыхнӑ, тен, хӑнӑхман бижутерипе усӑ курнӑ.

## 4-МĔШ ПРАВИЛО

Модӑна сӑнасах тӑмалла. Вӗҫӗмсӗр йӗрлемелле мар ӗнтӗ, хушӑран пӑхкаласах тӑмалла: тен, мӗн те пулин интересли сиксе тухать. Мода тенденцийӗсене асӑрхани – мода «чури» пулнине, бутиксенче ҫеҫ тум суйламаллине пӗлтермест. Стиль тата хальхиллӗх туйӑмӗсене туптасси – чи кирли. Сӑмахран, паян пурте ҫат тачӑ шӑлаварпа, «скини» джинсипе ҫӳреҫҫӗ (урисен конфигурацине пӑхмаҫҫӗ те чылайӑшӗ). Енчен те халӗ пурте питӗ ансӑр йӗм тӑхӑнаҫҫӗ пулсан, ҫывӑх вӑхӑтра вара кӗтсех тӑрӑр – темӗн сарлакӑш шӑлавар модӑна кӗрет. Ун пеккине халех ҫӗлесе тӑхӑнма та юрать: мода саккунлатакан пулса тӑрататӑр. Ҫак пӗчӗк ӗҫре те – питӗ сарлака шӑлавар (хӑвӑра килӗшет пулсан ӗнтӗ) е ҫанӑсӑр пальто (тренд ку) пуринчен малтан тӑхӑнма хӑюлӑх кирлӗ. Харсӑр та паттӑр пулма вӗренер апла!

Тумтирте темӗн чухлӗ стиль. Классически, романтически, фольклор, спорт, усӑ (бельевой), экстравагантлӑ, винтаж, тинӗс, халӑх (этнически), экологи, сафари, милитари, минимализм, casuai, эротикӑллӑ, гламур, грант, oversve-Look стильсем ҫинчен ытларах пӗлетпӗр эпир.

Юлашки ҫулсенче уйрӑм стильсем ҫине пайласси ҫемҫелсех пырать пулин те – модӑра диффузлӑ стиль сиксе тухрӗ: хӑш-пӗр япаласене «пӗр-пӗринпе майлашайманнисене майлаштарни» принциппа комплектлаҫҫӗ. Апла пулсан, стильсенчен те хӑвӑра лайӑхлатаканнисене ҫеҫ суйласа вӗсене нимӗн хӑрамасӑр пӗрлештерме пултаратӑр. Кун пирки тӗплӗнрех каярах калаҫӑпӑр.

Халӗ вара стиль туйӑмне (стиль туяслӑха) тӗрӗслесе пӑхма сӗнетӗп сире. Вӗсен ячӗсене тупса палӑртӑр та мана lik100@bk.ru адреспа ярса парӑр. Хуравсене балсемпе хаклӑп. Малашнехи уроксенче те заданисем пулӗҫ, вӗсене те балсемпе шайлаштарӑпӑр. Кайран вара ҫӗнтерӳҫӗне парне кӗтет!

Ҫитес занятире кӗлеткесен (фигурӑсен) ушкӑнлӑхӗсене (типӗсене), ӳт-пӳ евӗрлӗхӗсене сӳтсе явӑпӑр. Питӗ пысӑк тема ку, ҫавӑнпа темиҫе урок йӗркелӗпӗр. Ҫын мӗнле тумтир тӑхӑннине пӑхмасӑр унӑн кӗлеткин евӗрлӗхӗсене курма вӗренӗпӗр. Ӳт-пӳ ҫитменлӗхӗсене ҫи-пуҫпа мӗнле пытармаллине вара каярахпа пӑхса тухӑпӑр.

Малтанхи урок хыҫҫӑн эпӗ темиҫе ыйту илтӗм. Хӗрсене электронлӑ почтӑпа хуравларӑм. Вӗсенчен хӑшӗсем ыйтухурава журналта пичетлеме килӗшрӗҫ.

«Манӑн сӑмса ытла вӑрӑм та ҫинҫе. Ҫитменнине ытла мала тухса тӑрать. Прическӑпа – ҫӳҫе майласах ҫак ҫитменлӗхе якатма-пытарма пулать-и?» – тесе ыйтать Валя.

Валентина, санӑн челкӑпа (ҫамкана хупласа) ҫӳремелле. Енчен те хӑвна челка килӗшмест пулсан, пробора (ҫӳҫе уйӑрнине) хӑяккӑн, аяккинче тумалла. Ҫапах та челка аванрах.

Прическӑна ҫӳҫе малалла, пит патнелле тураса тумалла. Ҫамкана вара хупламаллах, челка халӗ модӑра.

Ҫӳҫе хыҫалалла хытӑ якатса турама юрамасть. Ҫӳллӗ «лаша хӳри» те ҫыхмалла мар. Тӳрӗ пробор та вырӑнсӑр. Сӑмса пысӑк чухне ҫӳҫе вӗттӗн кӑтралатмаҫҫӗ, пысӑк пайӑркасемпе (локонсемпе) ҫырлахаҫҫӗ. Хӑлхана уҫни вырӑнлӑ мар, искусствӑллӑ куҫ хупанккисене ҫыпӑҫтарни аван.

Прическӑпа ҫеҫ мар сӑмсана «кӗскетме» пулать. Кунта макияж аван пулӑшать – lik1.ru сайтра вӗренӗр ҫак ӑсталӑха.

Тумтир пайӗсемпе те сӑн хӑй евӗрлӗхне (вӑрӑм сӑмсана) ретушлама майсем пур. Пит ҫывӑхӗнче шӗвӗр кӗтеслӗ пайсем пулмасан аванрах, шӗвӗр кӗтеслӗ ҫуха та, шӗвӗркке эреш те, мӑйӑн V-евӗрлӗ касӑмӗ та вырӑнсӑр.

Ан ӳркенӗр – тӑрӑшӑр! Мӗн ӑнланмалла мар – ыйтӑр. Ан вӑтанӑр!

Кам пирӗн lik1.ru сайтра пулман – кӗрсе курӑр, илемлӗ пулӑр.

**Илемлӗх шкулӗн ертӳҫи - Елена СТЕПАНОВА**






# Кăвак куçлă градусник

***Васлей манăн виççĕмĕш сыпăкри пичче пулин те, ун пирки сахал пĕлетĕн. Ара, урăх районта пурăнакан-скерсем нихăçан та пирĕн пата килсе курман. Хамăр та вĕсен тăрăхне ал хапăлах тухса вĕçтермен.***

Пĕррехинче – çитрĕ Васлей! Ĕмĕрне те пулманччĕ кун пек хисеп туни. Хĕпĕртенипе пиншакне те хамах хывса шифоньера çакрăм, часрах чей лартса ятăм.

– Лисук, нуша килсе çапрĕ. Халĕ мана вунă пин тенкĕ укça кирлĕ. Эсĕ аннÿ пекех ырă кăмăллине пĕлнĕрен сан пата килтĕм. Кивçен параймăн-ши? – пуçларĕ пичче сăмах-юмахне.

Кĕçĕтмен пуçа хыçса илтĕм те унталла-кунталла уткалама тытăнтăм. Укçи пур-ха, анчах хăçан каялла таврăрса парĕ-ши? Кăмăлĕпе темлескер-ха вăл, асламăшне хывнă пулсан – пĕтрĕм вара! Тепĕр тесен, манăн кукамай та куштан, анчах эпĕ ун пек мар-çке. Апла пулсан Васлее шанма пулать.

Эх, хĕпĕртесе тухса кайрĕ ман патăмран пичче! Телефон номерне те пачĕ, хăй ăçта пурăннине те каларĕ. Чи савăнмалли – хăнана та чĕнчĕ.

Уйăх иртсен кивçен укça пирки аса илтĕм те Васлей патне шăнкăравларăм.

– Кăшт кĕт, тархасшăн. Ыран-паян Мускавран аппа килмелле. Вăл пирĕн ахаль-махаль çĕрте ĕçлемест, çавăнпа кĕсье тулли укça унăн, – ман патра хăнара пулнă пекех хитрен калаçрĕ хайхискер.

Унтанпа каллех уйăх иртрĕ. Васлейрен çаплах сас-хура çук. Пиччене аса та илес çукчĕ-ха, укça кирлĕ пулчĕ: чипер утнă чухнех пушмак кĕлли тухса ÿкрĕ. Каллех шăнкăравларăм пиччем патне.

– Кĕт ĕнтĕ кăштах. Çитменнине эпĕ саншăн ют çын та мар, пиччÿ! – юптарчĕ унчченхи юрринех.

Тарăхса кайрăм. Мĕн, вăл тесе халĕ манăн кĕлесĕр пушмакпа çÿремелле тет-им?

– Итле-ха, юратнă пиччем. Эсĕ халĕ ăçта? – хăпмарăн унран.

– Килте.

– Апла хăнана пыратăп.

– Эпĕ чирлетĕп. Çавăнпа чăрманса ан çÿре, – терĕ те телефона сÿнтерчĕ.

Путсĕр, кур-ха эсĕ ăна! Манран еплерех кулать! Вĕçтерсе çитрĕм ун патне. Чăн та, вырăнпах выртать Васлей. Хĕрхентĕм.

– Ах, пĕр вăй çук-çке... Хул хушшинчи градуснике кăларса пăхсам, миçе кăтартать? Пуç тÿсмелле мар ыратать, – вăйсăррăн калаçрĕ пичче.

Тĕнче! Чăнах та ÿт температури хĕрĕх градуса çитнĕ! Тăхтамасăр аптекăна чупрăм. Çул çинче «Васкавлă пулăшу» машинине те чĕнме ăс çитертĕм.

...Васлее тĕрлĕ эмел ĕçтертĕм те икĕ-виçĕ хут утиялпа пуçĕ таранах витрĕм. Шăп çак вăхăтра шурă халатлисем çитрĕç. Пичче вĕсене курсан вырăн çинчен ялт сиксе тăчĕ. Куçĕсем вара, тупата, консерв банки пысăкăш чарăлса кайрĕç.

– Пĕчĕк ачалла ан хăра-ха! Вĕсем сана укол туса хăварĕç е хăйсемпе пĕрле илсе кайĕç. Мĕнле те пулин чĕрĕлмеллех санăн, – ăнлантаратăп хайхискере.

Тухтăр Васлей çамкине сĕртĕнсе пăхрĕ те:

– Мĕн ыратать санăн, çамрăк çыннăм? – кăсăкланчĕ самантрах.

– Ÿт температури пысăк унăн. Таçта вырăн çинчех вилсе ан кайтăр тата, – пичче сăмах хушманнине кура хам хуравларăм.



– Çамки вĕри мар-çке, апла градусник лартса пăхас...

Висрĕç те – Васлейĕн температури 36 градус çеç. Чим, чирлĕ çынран мĕн-ма кулаççĕ вара вĕсем? Тарăхнипе хамăрăн градуснике кăтартрăм çавсене.

– Лисук, эпĕ чирлĕ мар. Ахалех вĕсемпе ан хирĕç. Градуснике батарея çине хурса хĕрĕхе çитертĕм. Эсĕ тухтăрсене чĕнессе шухăшлама та пултарайман, – терĕ Васлей мăкăртаткаласа.

Намăс! Атăла кайса сикес килчĕ! Юрать пĕр тухтăрне Васлей паллать иккен, унсăрăн пире мĕн чухлĕ штраф тÿлеттеретчĕç-ши? Шухăшлама хăрушă!

Нумаях пулмасть Васлей пичче шăнкăравларĕ. Пушкăрт чăвашĕсем патне спектаклĕпе каяççĕ иккен, мана та пĕрле илесшĕн. Сăн ÿкерме тата материал çырма. Хирĕçлемерĕм. Ара, вунă пин укçана таврăрса пачĕ вĕт!

Спектакль пуçланчĕ. Тĕп роле вылякан Васлей кăмăллă пулас. Сасартăк ман çума пилĕк-ултă çулсенчи хĕр ача пырса ларчĕ. Турăçăм! Сăнĕпе – каснă-лартнă Васлей! Шăп çак вăхăтра пуçа хиври шухăш пырса çапрĕ.

– Ачам, санăн ăнсăртран спектакльте выляс килмест-и? – шăппăн ыйтрăм шăпăрланран.

– Паллах, анчах ÿсмесĕр никам та илмест мана артиста, – терĕ вăл тунсăхлăн.

– Итле-ха, сцена çинче кăвак куçлă куккана куратăн-и? Вăт халĕ ун патне чупса пырса: «Аттеçĕм, атте!» – тесе кăшкăрмалла санăн. Вара ăнăçлă пулсан канфет та, укça та парăп, – терĕм.

Хĕр ача урăх нимĕн те итлемерĕ. Сцена çине лĕпĕш пек вĕçсе хăпарса кайрĕ те Васлей уринчен çакăнса: «Атте, аттеçĕм! Эсĕ мана мĕншĕн пăрахса хăвартăн? Эпĕ сана питĕ-питĕ юрататăп!» – терĕ чăн-чăн артистла.

Васлей шанк хытса тăчĕ. Çăварне карса пăрахрĕ: унăн умĕнче хăйĕнпе пĕр сăнлă, кăвак куçлă ача! Халăх хырăм тытса ахăлтатма тытăнчĕ. Çапла драмăран комедие куçрĕ спектакль. Тинех, тинех тавăртăм пиччене. Ара, хăй те мана тухтăрсен умĕнче епле намăс кăтартрĕ!

Çакăн хыççăн виçĕ эрне калаçмасăр пурăнчĕ манпа Васлей. Кайран кăмăлĕ уçăлчĕ. Ĕнтĕ халĕ эпир чи çывăх туссем. Пĕр-пĕрне нимĕнле йывăрлăхра та пăрахмастпăр. Тăвансем-çке.

Çапла вара Васлей валли хушма ят та тупăнчĕ – Кăвак куçлă градусник!

**Петĕр ЛИСУКĔ**

# Йĕрке пĕрре: паха тата хăвăрт!

***Чăваш Ен наци телевиденийĕ 3 çул çак йĕркене тĕпе хурса ĕçлет. «Çĕр хут илтиччен пĕр хут курнине нимĕн те çитмест», – теççĕ халăхра. Ку каларăша наци телевиденийĕн лозунгĕ тесех йышăнмалла.***



Паллаштарар-ха «Самант» тусĕсене хамăр каналпа. Каласа памалли нумай – чăн сăмахăн суййи çук. Курни-илтни пирки калакан лозунга асра тытса сăн ўкерчĕклĕ экскурси ирттерер, курăмлăрах пултăр.

Наци каналне цифра тытăмĕпе ĕçлекен оборудованипе тивĕçтерниех – пысăк кăтарту. Пирĕнни пек çĕнĕ ăрури техника хатĕрсем паян кунччен республикăра урăх никамăн та çук. Техника – фантастикăпа тан! Ансатрах каласан, камерăсем тўрех







флешка çине ўкереççĕ, 1-2 минутрах материала монтаж компьютерне куçарма май пур. Ятарлă передатчик пулăшнипе çак самантра камера мĕн ўкернине те тўрех эфира кăларма нимĕн те мар. Çĕнĕ хыпарсене хăвăрт хатĕрлеме май парать ку.

«Республика» чăвашла тата вырăсла информаци кăларăмĕ кашни кунах тўрĕ эфира тухать. Кăсалтан çĕнĕ хыпарсене тата хăш-пĕр кăларăмсене çĕн сĕмлетрĕмĕр: илтменнисем валли титрсем кăтартатпăр. Текст чупакан йĕркепе пырать.

Шупашкарта иртекен пĕлтерĕшлĕ мероприятисене килтен тухмасăрах курма май пуррине çынсем хăнăхрĕç ĕнтĕ. «Вĕршĕнсем» пилотаж ушкăнĕн вĕçевĕ, «Раççей çăл куçĕсем» фестиваль, Олимпиада çулăмĕн эстафети – тата ытти ĕç-пуç Чăваш Ен наци телевиденийĕн тўрĕ эфирĕнче пулчĕç.





Кулленхи ĕçсемсĕр пуçне Чăваш Ен наци телевиденийĕн ĕçченĕсем патшалăх органĕсен сайтĕнчи видеохыпарсем валли уйрăм сюжетсем тăваççĕ.

Виçĕ çул каялла юпа уйăхĕн 17-мĕшĕнче Чăваш Ен наци телевиденийĕн пĕрремĕш передачи – «Республика» кăларăм иртрĕ. Кăçал вара юпа уйăхĕнче кăна эфира 43 премьера тухать. Хамăр вăйпа тунă кăларăмсем кунсерен 3 сехет йышăнаççĕ.

Пирĕн каналăн архивĕ республикăри театрсен, халăх тетарĕсен спектаклĕсемпе, тĕрлĕ концертсемпе пуянланать. Çакăнпа пĕрлех патшалăх телерадиокомпанийĕн архивĕнчи кăларăмсене, электронлă кинодокументаци архивĕнче упранакан чăвашла куçарнă паллă фильмсене те курма май пур.

Тĕп тĕллев – куракансен йышне ӳстересси. Паян Чăваш Ен наци телевиденине Шупашкар, Çĕнĕ Шупашкар, Çĕрпӳ, Сĕнтĕрвăрри, Куславкка, Канаш хулисенче, Тĕрлемесре, Сăнав, Кӳкеç, Вăрнар поселокĕсенче кураççĕ. Республикăри ытти пысăк ялсене сигнал илсе çитерес тĕлĕшпе те ĕçсем пыраççĕ. Наци телевиденийĕн кăларăмĕсене Интернетра – «Ростелеком» сечĕн IP-TV формачĕпе тата Чăваш Ен наци телерадиокомпанийĕн сайтĕнче курма пулать.

**Надежда ЯКОВЛЕВА**





# ХАЛӐХ СУДЙИСЕНЧЕН ВӐЛ ÇЕÇ ГЕРОЙ

*(Вĕçĕ. Пуçламăшĕ иртнĕ номерте)*



## 2. ЮРИСТ СУКМАКĔ

ВКП(б)-ăн районти комитет бюровĕ Алексей Романовича, 30-мĕш çулсем вĕçĕнче çынсене юрист пулăшăвĕ паракана тата çав вăхăтрах халăх заседателĕ те пулнă специалиста, 1-мĕш участок судйин çумĕ пулма çирĕплетнĕ. Халăх судьи В.П.Яндайкин чирлесен е отпуска кайсан унăн тивĕçĕсене пурнăçлаканĕ А.Р.Логинов пулнă. Нотариус сĕтелĕн заведующийĕн тивĕçĕсене пурнăçлама вара халăх сучĕн иккĕмĕш секретарьне А.А.Орлова хушнă.

Нумаях та вăхăт иртмен, Чăваш АССР юстицин халăх комиссарĕн хушăвĕпе килĕшӳллĕн А.Р.Логинова нотариус ĕçĕнчен хăтарса адвокатсен юлташлăхне куçарнă. Ĕç хĕсметлĕхĕнче Алексей Романович пысăк утăм тунă тесе хакламалла çакна. Чăнах та, вăл пуçламăш пĕлӳ илнĕ çын кăна иккенне тата вăрçă умĕнхи çулсен пăтăрмахĕсене шута илсен – çĕнĕ ĕç вырăнĕ пуç çаврăнса каймалла карьера шутланнă. Ĕçри çитĕнӳсем, çăл куç пек таса чунĕн талпăнăвĕ вĕри чĕреллĕ юриста вĕçĕм малалла кайма хавхалантарса тăнă. Çакă мар-ши этеме вилĕмсĕрлĕхе çул хывма пулăшакан вăрттăнлăхăн тупсăмĕ?

1940 çулхи чӳк уйăхĕн 15-мĕшĕнче Элĕк районĕн ĕç çыннисен депутачĕсен Совечĕ Алексей Романовича халăх сучĕн 2-мĕш участок судйин полномочийĕсене шанса панă.

Вăрçă пуçлансан халăх сучĕн 2-мĕш участокĕ хупăннă. А.Р.Логинов судьяна çĕнĕ вырăн кĕтнĕ. Çавна шута илсе çемйине – арăмĕпе вицĕ ачине (4 çулти кĕçĕн хĕр ачи Юля вилнĕ) каялла Упукушкăнь ялне ăсатнă вăл. Ĕç хĕсметлĕхĕ юриста Красноармейские илсе çитернĕ, ăна районти халăх сучĕн тилхепине тыттарнă. Районти лару-тăрупа тĕплĕн паллашса халăх судйи тивĕçĕсене туллин пурнăçлама та ĕлкĕреймен тĕр вăл. Республикăн юстици комиссарĕ С.Я.Чумуркин 1941 çулхи раштавăн 18-мĕшĕнче Логинов судья Хĕрлĕ Çара тухса кайнине хушу çырса палăртнă.

Халăх судйи фронтра çар трибуналĕн членĕ пулса тăнă. Яваплă вырăнта, чирлесен госпитале сипленме выртиччен, ăйăплавçă пулса çар çыннисен шăпине тĕрĕс татса пама тăрăшнă. Совет Çарĕнче кĕçĕн сыпăкри офицерсем çитмен. Логинова командирсен пĕлĕвне ӳстермелли вицĕ уйăхлăх курса янă.

1943 çулта, вĕренӳ хыççăн фронта ăсатас умĕн, Логинов лейтенанта çемйипе курнăçма ултă кунлăх отпуск панă. Çу уйăхĕнче ăна тăван ялĕ, çемйи кĕтсе илнĕ. Шел, ашшĕ, Роман Степанович, çулталăк каялла çут тĕнчерен уйрăлса кайнă. Йăван шăллĕ Мускав çывăхĕнче пуçне хунă. Федорпа Петр пиччĕшĕпе шăллĕ, Мишок ывăлĕ фронтра çапăçнă.

Вăрçа тухса кайнă чух Алексей Романовича ăсатма укăлча хапхи умне ялĕпех тухнă.

– Элексçи тетин хул пуççийĕсем çинче пакунсем пуррине, эпĕ – пилĕк çулхи шăпăрлан, лăйăх астуса юлнă. Ватăсем унпа сăмахласа фронтри лару-тăрупа кăсăкланчĕç. Вĕсен калаçăвне манса та кайнă ĕнтĕ. Ялтан кайсан ăçта çитмеллине те ыйтрĕç унран. Вăл вара:

– Манăн Пермь хулине каймалла, – терĕ.

– Пермь хули тата ăçта ларать? – кăсăкланчĕç ăсатакансем.

Хуравĕ ăнланмалла пултăр тесе пулас, Элекçи тети аллине тухăçалла тăсрĕ те: «Авă çавăнта!» – терĕ.

– Маншăн çав самант – историллĕ. Укăлча хапхи умĕнчи уйрăлу яланлăха пуçа кĕрсе юлнă та – нихăçан та манăçăнмасть, – каласа парса савăнтарчĕ те, тĕлĕнтерчĕ те геройăн шăллĕн Петр Романовичăн ывăлĕ – 76 çулхи Микулай (Николай Петрович).

–Халăх судйисенчен пĕр вăл çеç герой, – çапла хаклать А.Р.Логиновăн шăпипе паллашса унăн профессиллĕ ĕçне тĕплĕн тишкерсе тĕпченĕ тата тивĕçлĕ хак панă Николай Васильевич Яковлев – Чăваш Республикин Верховнăй Сучĕн судйи, Раççей Федерацийĕн тата Чăваш Республикин хисеплĕ юрисчĕ.

## 3. АН ЙĔР, АПИ

Юпа уйăхĕнче мăшăрĕн вилнĕ хутне илсен Еленшĕн çут тĕнче тĕссĕрлĕхпе хупланнă. Каçсерен ыйхи татăлнă унăн. Тĕттĕм пӳлĕмре кăмака хыçĕнчи шăрчăк сассине, Якур ывăлĕпе Маруç хĕрачи тутлăн çывăрнине итлесе выртнă май хĕрарăм чунĕ аса илӳ семпе тулнă.

Çунакан чĕрине колхозра тата килти хуçалăхра аллинчен ĕç ямасăр лăплантарма тăрăшнă тăлăх арăм.

Елена Егоровна шывланнă куçĕсене ачисенчен яланах пытарса çитереймен.

– Ан йĕр, апи. Хам çитĕнсен сана тутри-тутрипе пĕремĕк илсе парăп,– тенĕ йăпатма тăрăшса, инвалид çуралнă кĕçĕн ывăлĕ Якур. Амăшĕн пурăнас шанăçĕ те ун çине çеç юлнă ĕнтĕ. хуçалăх тытма пултараканни те вăл кăна юлнă. Мĕншĕн тесен Еленăн аслă ывăлĕ Мишок та вăрăçăра пуçне хунă.

17 çулхи Мишока 1942 çулхи хура кĕркунне вăрçа илсе кайнă. Салтак шăпи уншăн ытла синкерлĕ çаврăнса килнĕ. Çул çинче, пĕр чугун çул станцине чарăнсан, выçăскер вăл лавккана çăкăр туянма каять те хăйĕн командин эшелонĕнчен тăрса юлать. Айăпа кĕнĕ çамрăка трибунала яраççĕ. Вара Михаил Хĕрлĕ Ялав орденĕллĕ 242-мĕш Тамань дивизийĕн 662-мĕш уйрăм çыхăну батальонĕн штраф ротине лекет. Батальон тинĕс пехотин йышĕнче тăнă.

Пĕрремĕш çапăçура аманнă, çапах чĕрĕ юлнă 18-ти штрафника «краснофлотец» ятне тавăрса панă. Айăпне каçарттарнă Логинов матрос радиста вĕренсе тухнă. Крыма ирĕке кăларассишĕн пынă хаяр çапăçусене хутшăннă. Акă тинĕс пехотин уйрăм батальонĕн командирĕ 1944 çулхи кăрлачăн 14-мĕшĕнче Михаил Логинов матрос валли хатĕрленĕ награда хучĕ:

«Çар ретĕнче 1943 çултанпа. ВЛКСМ членĕ. Пĕрре аманнă. Награда илмен. Çĕрле тинĕс десанчĕпе 71,1 тӳпеме илме хутшăннă. Тăшман траншейи патне шуса çитсе гранатăсемпе блиндаж аркатнă. Виçĕ фашиста автоматран персе вĕлернĕ. Çапăçу хирĕнчен аманнă юлташне илсе тухса çăлса хăварнă. Çак паттăрлăхшăн 1-мĕш степеньлĕ «Тăван çĕр-шывăн Аслă вăрçи» ордена илме тивĕç».

Тепĕр документ, уйрăм батальон командирĕ 1944 çулхи çу уйăхĕн 15-мĕшĕнче çырнă награда хутне илсе кăтартар. Ун чухне Михаил Севастополь хулине ирĕке кăларма хутшăннă.

«Пульăсемпе снарояд ванчăкĕсен пуç çийĕн çăвакан вутлă çумăрĕ айĕн малалла каякан штраф ротипе пĕрле пырса радиостанцийĕпе дивизи штабĕпе хăвăрт тата пĕр кăлтăксăр çыхăну йĕркелесе парса ротăна оперативлă ертсе пыма май панă. Çав вăхăтрах аманнă боецсене çапăçу хирĕнчен тухма пурнăçне шеллемесĕр пулăшнă. Икĕ урри те аманнă взвод командирне тамăкран илсе тухса çăлса хăварнă». Награда хучĕн вĕçне: «Достоин вторичной правительственной награды – ордена Красной Звезды», – тесе çырса хуни пур.

Штраф ротинче çапăçса паттăрлăх кăтартнăшăн та Михаила Хĕрлĕ Çăлтăр орденне илме тăратнă пулнă апла. Анчах паман.

«Аттешĕн тавăратăп», – тесе çырнă амăшĕ патне янă пĕр çырăвĕнче ывăлĕ. Анчах вăрçăран таврăнма ăна шăпа пӳрмен. Икĕ орден кавалерĕ, 19 çулхи Михаил Логинов матрос 1945 çулхи нарăс уйăхĕнче пуçне хунă. Ăна Польшăра, Капница хуторĕн масарĕнче пытарнă. Ывăлĕ те ашшĕ пекех вилĕмсĕрлĕхе çул хывнă.

– Ах, Элекçи! Мишок ывăлăм! Иксĕр те вăхăтсăр çĕре кĕтĕр те – канлĕн çывăрăр. Эпир те кунта мĕн кăна чăтса тӳссе курмарăмăр-ши? Элекçи, юрать Хветĕк пиччӳпе Петĕр шăллу таса та сывă таврăнчĕç. Мана санăн герой ячĕ мар, ачасене çын тума, хуçалăха тытса тăма, хăна-вĕрлере тăвансемпе пĕрле савăнма хăв кирлĕччĕ. Аслă ывăла авлантарса мăнуксене утьăкка сиктерейморĕм. Вутлă тăвăл мĕн чухлĕ çынна тĕпсĕр авăра вĕри карланкипе çăтрĕ. Эх, Элекçи, аçу хăрушă хыпара пĕлмесĕр çĕре кĕнĕрен, тен, пиртен телейлĕрех пулчĕ? Санпа мăшăрланни те ĕнер çеç пек, – куççуль тăкма чарăнаймасăр çапла аса илнĕ Елена Егоровна мăшăрĕпе аслă ывăлне.

## 4. АСТĂВĂМ

Алексей Романович, яваплă та пуçиле ĕçре ĕçленĕскер, çынлăхне нихăçан та çухатман. Мĕн пултарнă таран тăван-пĕтенĕсене те пулăшнă. Йăван шăллĕн Кушлавăш ялĕнче пурăнакан хĕрĕ Степанида Ивановна Андреева (89 çула кайнă) унăн ырă кăмăлне халĕ те асра тытать.

– Элĕк районĕн халăх сучĕн секретарĕнче ĕçлеме хăйпе пĕрле Варвари аппăшĕн аслă ывăлне, манран пĕр çул кĕçĕн Федот Павлович Тимофеева, илсе кайрĕ, – тулли кăмăлпа каласа пачĕ Сăхвани кинемей.

– Мана, çамрăк хĕр ачана, Иваново облаçне торф кăларнă çĕре оргнабор йĕркипе ĕçлеме ярасшăнччĕ. Вара Элекçи пичче мана Хĕрлĕ Чутайри обществăлла апатлану столовăйĕнче тĕрлĕ ĕçсем тăвакана вырнаçтарчĕ,– темиçе çул каяллах, хăй сывă пурăннă чух каласа панăччĕ Логиновăн çывăх тăванĕ, Штанаш ял тăрăхĕнче чи нумай çул пурăннă ватă, халĕ çĕре кĕнĕ Анна Тихоновна Евдокимова (Пахинова).

Алексей Романовичăн йăхне Галина Егоровна (Тури Çĕрпӳкасси ялĕ), Маргарита Николаевна (Нижневартовск), Валерий Николаевич (Шупашкар) мăнукĕсем малалла тăсаççĕ.

***Сăн ӳкерчĕкре: Алексей Романович, унăн мăшăрĕ Елена Егоровна, ачисем: Егор, Мария, Михаил, амăшĕн чĕрçи çинче – Юлия.***

**Л.Медведев, Хĕрлĕ Чутай районĕ**



# Тантăшсем

***Пуш уйăхĕн вĕçĕнче «Самантăн» 3-мĕш номерĕ тухсан Ишекри вăтам шкулта вĕрентекен Петр Романов шăнкăравларĕ. Кăларăмра пичетленнĕ «Ялти тантăш» ыйтăм хуравĕсем Ишек шкулĕнчи çамрăксене питех килĕшменни пирки пĕлтерчĕ. «Шупашкарти лицейра вĕренекенсен сăмахĕсене пуçтарăнсах сўтсе яврăмăр, – савăнтарчĕ Петр Михайлович. – «Самантра» вĕсене хурав парас терĕмĕр».***

***Пĕлер-ха эппин Ишек çамрăкĕсен шухăш-кăмăлне.***



## ХУРАВ

– Хула ачисем ял çамрăкĕсене кăшт тиркени сисĕнет. Мăн кăмăллăрах калаçаççĕ, хăйсене çўле хураççĕ. Ял ачисем хула ачисенчен нихăш енчен те япăх мар. Вĕсем катăкрах тесе ан шухăшлаччăр. Танлаштарса пăхсан – мĕнпе лайăх пулса тухаççĕ хуларисем?

Паллах, хулара вĕсем хăйсене килти пекех тытаççĕ, анчах яла пырсассăн нимĕн те пĕлмеççĕ, нимĕн те ăнланмаççĕ.

«Ял вăл – лапра, унта ĕне кăна сăваççĕ, ачисен компьютер та çук», – тесе шухăшлаççĕ хула çамрăкĕсем. Вĕсемшĕн – кунта пурнăç сĕм авалхи тăрса юлнă, аталану шанса хыщса ларнă.

Йăлтах пур кунта, пурнăç сиккипе пырать. Хулара вара ялти пек таса сывлăш тупаятăр-ши? Этем – çут çанталăк ачи тесе ахальтен каламаççĕ. Çут çанталăкран уйрăлса каймасан çеç малашлăх пирки калаçма пулать. Ахаль ăпăр-тапăр та хулари тантăшсемшĕн асаплă та ыратуллă хăш чухне. Пĕчĕк вăрмана кĕртсе ярсан вĕсене – каялла тухасси иккĕленўллĕ. Виçĕ йывăç хушшинчех аташса каяççĕ, ăçта каймаллине чухламаççĕ. Илсе кăтартнă тĕслĕх кăшт айвантарах ĕнтĕ, çапах та чăнлăха тĕрĕс кăтартать.

Ялти ачасем мĕн пĕчĕкрен ĕçе хăнăхаççĕ, темĕн тума та пĕлеççĕ. Урамра тĕрлĕ вăйă выляççĕ. Хуларисем вара ытларах компьютер вăййисене кăмăллаççĕ. Ялти тантăшĕсенчен сахалтарах хускалаççĕ, ўтпĕвпе имшертерех аталанаççĕ. Вĕсене çĕнĕ вăйăсем выляма компьютера программăсем лартса паракансем вара чылай чухне ял шкулĕнчен вĕренсе тухнă çамрăксемех.

Нихăш енчен те, никамран та катăк мар ял ачисем.

**Павел ВАСИЛЬЕВ, Анастасия ТАРАСОВА, Юлия СУРКОВА, Александр НИКОЛАЕВ**

## РЕДАКЦИРЕН

Ялти тата хулари ачасем мĕнпе уйрăлса тăнине хулари тата ялти шкулсенче ĕçлекен вĕрентекенсем лайăх каласа пать паратăр. Ишек шкулне информатика урокĕсем ирттерме Василий Васильев çўрет. Çав вăхăтрах вăл хула шкулĕнче те вĕрентет. «Ял çамрăкĕсем вĕрентекене итлеççĕ. Хулари ачасем харсăр, учителе пит итлесшĕн мар. Вĕсемпе ĕçлеме самай йывăртарах», – хаклать Василий Владиславович.

Пуш уйăхĕнче ирттернĕ тавлашулла ыйтăм пирки çакна ăнлантарса памалла. Шупашкарти 3-мĕш лицей – физикăпа математика предмечĕсемпе тарăн пĕлў паракан заведени. Унта экзамен тыттарса вĕренме илеççĕ. Лицей Мускаври аслă шкулсемпе таччăн çыхăнса ĕçлет, вĕсен лаптамĕ шутланать. Çавăнпа ачасем, тен, кăшт мăн кăмăллăрах та пулĕ.

Тепĕр самант та пур. Ыйтăма хутшăннă ачасем ялсене тухса çўремеççĕ, вĕсен ашшĕ-амăшĕ – хула çыннисем. Çавăнпа ыйтăмри лицеистсем ял çамрăкĕсене хула урамĕсенче кăна курнă темелле. Мĕн пĕчĕкрен аслашшĕ-асламăшĕ патне районсене тухса çўремен вĕсем, ялти тантăшĕсемпе туслашман.

Ыйтăм хуравĕсем Ишек çамрăкĕсене çеç килĕшмен тесе каламастпăр: кăмăлсăррисем татах та пулчĕç. Çак ĕç-пуçăн пысăк плюсĕ – çамрăксен пĕр-пĕрне ăнланма тăрăшмалла çеç мар, вĕренмелле те пĕлмелле тесе çирĕплетни. Туслă (паянхи чĕлхепе каласан – толерантлă) хутшăнусем шăпах проблемăна çутатса панинчен пуçланаççĕ.

© САМАНТ

**Аслă классенче вĕренекенсемпе çамрăксен журналĕ**

*ИНДЕКС*
*73208 (республикăра)*
*11467 (республика тулашĕнче)*

**1929-1991 çулсенче «Хатĕр пул!», 2003 çулччен «Çилçунат» ятсемпе тухнă**

10 (673) № 2014 ç.

*УЧРЕДИТЕЛЬСЕМ:*
Чăваш Республикин Информаци политикин тата массăллă коммуникацисен министерстви

**Чăваш Республикин Информаци политикин тата массăллă коммуникацисен министерствин «Хыпар» Издательство çурчĕ» Чăваш Республикин хăй тытăмлă учрежденийĕ.**

Директор-тĕп редактор тивĕçĕсене пурнăçлакан - **Г.А.МАКСИМОВ**

Явапла редактор - **В.СТЕПАНОВ.**

Компьютер дизайнĕ - **И.МИЛОВИДОВА.**

Пирĕн сайт: **www.hypar.ru**

Электрон адрес: **tantas@list.ru**

Редакципе издатель адресĕ: 428019, Шупашкар хули, Иван Яковлев пр.,13, Пичет çурчĕ, «Хыпар» Издательство çурчĕ

Телефонсем:
**56-00-67**
**28-83-89**

Федерацин çыхăну, информаци технологийĕсен тата массăллă коммуникацисен сферинчи надзор службин Чăваш Республикинчи управленийĕ (Роскомнадзор) 2013 çулхи раштав уйăхĕн 12-мĕшĕнче ПИ ТУ 21-00310 № регистрациленĕ.

Хакĕ ирĕклĕ.

Журнала редакцире калăпланă, «Чувашия» ИПК» ПУП (И. Яковлев пр.,13) пичетленĕ.

Пичете ала пуснă: 17.10.2014.
Пичетленĕ: 27.10.2014.

Хут формачĕ 60х84 1\8
Усл. п. л. 2,83.
Тираж 1503 экз.
Заказ № К-2032




***Ирина ПЕТРОВА***

Лаша çулĕнче çуралнă, гороскоппа – сурăх. Çулталăкри вăхăтсенчен çуркуннепе çулла чунне çывăх. Шурă кĕлчечеке килĕштерет. Пушă вăхăтра уçăлса çӳреме, велосипедпа ярăнма тата апат пĕçерме юратать. Пан улми тата çĕр улми кукăлĕ уйрăмах тутлă пулаççĕ. Юратнă çыравçи – Ф.М. Достоевский. Çынсенче тӳрĕлĕхе, тĕрĕслĕхе тата ырă кăмăллăха хаклать. Ултава тата мăн кăмăлланнине тӳсме пултараймасть. Пурнăç девизĕ – кашни япалан хăйĕн вăхăчĕ.



19



20



***Анастасия МОТОВА***

Тигр çулĕнче çуралнă, гороскоппа – Шыв тăкан. Ташлама кăмăллать, юрлас енчен вара – Пĕтĕм Раççейри ăмăртусен лауреачĕ. Юратнă чечек – салтак тӳми (ромашка), тĕс – чакăр (бирюзовый). Настя хулари тантăшĕсене чăваш чĕлхине тăрăшса вĕренме сĕнет: «Питĕ интереслĕ – тĕлĕнсе каятăр!» Юратнă предмет вара – хими.